БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Март 28 шăматкун № 64 (8973)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

И. СТАЛИН. ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем (2—3 стр.).
А. М. Горький çуралнăранпа 85 çул тултарчĕ (1 стр.).
Аслă писатель (И. Успенский статьи) (1 стр.).
А. М. Горькие асăнса (1 стр.).
Паха апат-çимĕç ытларах туса кăларассишĕн (4 стр.).
Н. Пушкин. — Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ ÿсĕмсемшĕн (4 стр.).
Итали халăхĕ Пальмиро Тольятти 60 çул тултарнине палăртать (4 стр.).
Бирма правительстви ООН-а панă жалоба (4 стр.).
Польшăра Америка шпионĕсене суд тунă (4 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ (4 стр.).
Филиппинри ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар хăйĕн ĕçне активлатнă (4 стр.).
Францире демократи деятелĕсене арестлеççĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Америка лагерĕсенче тыткăнри çар çыннисене çаплах вĕлереççĕ (4 стр.).

Массăсене ĕç çине коммунизмла пăхма вĕрентесси

Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви таврă нихçанхинчен те тачăрах пĕтĕçрĕ. Пирĕн халăх хăйĕн аслă вăй-хăватне вĕçĕ-хĕррисĕр ĕненсе тата çĕршывăн иксĕлми пуянлăхне ярăççăн курса, коммунизм тумалли сталинла программăна ăнăçлă пурнăçласа пырать.

Çĕршыври рабочисем, колхозниксем, интеллигенци тата ытти мĕнпур ĕçсыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ: коммунизмла общество тăвас ĕçре ăнăçусемпе çĕнтерÿсем кÿрекен тĕп никĕс вăл Коммунистсен партийĕн аслă политики пулса тăрать. Çак политикăн, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен пурнăç интересĕсене, çавăн пекех тĕнчери мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн интересĕсене тивĕçтерекен политикăн тĕп принципĕсене аслă Сталинăн чи шанчăклă та çывăх соратникĕсем — Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем мартăн 9-мĕшĕнче Мускавра пулнă траурлă митингра каланă сăмахсенче кăтартса панă.

Партин Центральнăй Комитечĕн пленумĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ, çĕршыв пурнăçне нимĕнле чăрмавсăр тата тĕрĕс ертсе пымалла тăвас тесе, питех те кирлĕ решенисем йышăнчĕç. СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ, çав решенисене пăхса тухса, пурне те çирĕплетрĕ, законлă вăй пачĕ. Сесси йышăннă законсемпе постановленисене—хамăр Тăван çĕршывăн вăй-хăватне малалла ÿстерес, совет çыннисен пурнăçне тата та ытларах лайăхлатас тĕллевпе йышăннă законсемпе постановленисене пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх пĕр шухăш-кăмăллă пулса ырларĕ. Халăхăн мĕнпур сийĕсен—рабочисен, колхозниксен, интеллигентсен—материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатассишĕн, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене çителĕклĕнех тивĕçтерессишĕн Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялан тăрăшнă тата тăрăшаççĕ те.

Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр И. В. Сталин пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйăрлнă пирки совет халăхĕшĕн, тĕнчери прогрессивлă пĕтĕм этемлĕхшĕн кĕтмен çĕртен пысăк хурлăх килсе тухсан, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ мĕнпур ĕçсыннисене харпăр хăй вăйĕпе творчествăллă хăватне хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерес аслă ĕçе хума чĕнчĕç. Çак чĕнÿ совет çыннисен чĕрине кĕрсе вырнаçрĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн фабрикăсемпе заводсенче, транспортра, колхозсемпе МТС-сенче, учреждениесенче,—пур çĕрте те совет çыннисем хамăр государствăшăн питех те кирлĕ пысăк ĕçсене ăнăçлă туса пыраççĕ. Вĕсенчен кашниех Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен тухăçлăрах ĕçлес тесе, хăйĕн пĕтĕм вăйне, пултарулăхне парать.

— Эпĕ кулленхи ĕç нормине икĕ хут ытларах тултарса пыма тупа тăватăп,—тет Çĕмĕрлери «Комбайндеталь» заводри работница Полина Горохова. Вăл хăйĕн сăмахне пурнăçласа пырать.

— Çыннăн тĕрлĕ хурлăх пулать, анчах вăхăт иртнĕçемĕн çав хурлăха манатăн. Анчах ку хурлăха, пирĕншĕн пысăк çухатăва нимĕнпе те тавăрма çук. Аслă Сталинăн çутă ячĕ пирĕн чĕремĕрте ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, унăн ячĕ пире ĕçре пултарулăх, кĕрешÿре вăй-хăват, йывăрлăхра чăтăмлăх кÿрсе тăрĕ. Эпĕ кулленхи ĕç нормине икĕ хут çурă ытларах тултарса пыма пулатăп,—тет çав заводри слесарь Дмитрий Чунаев. Вăл хăйĕн сăмахне пурнăçласа пырать.

Совет çĕршывĕнчи кашни ĕçсынни халĕ çав туйăмпа пурăнать.

Пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв хăйĕн вăйĕсем чечекленсе ÿснĕ тапхăрта пурăнать, вăл çĕнĕ çитĕнÿсем патнелле пырать. Коммунизмла обществăна пĕтĕмпех туса çитерме мĕн кирли пирĕн пурте пур. «Пирĕн,—тенĕ В. И. Ленин 1918 çулта,—чăн-чăн хăватлă тата пуянран та пуян Русь тума çутçанталăк пуянлăхĕнче те, çынсен вăй-хăвачĕн запасĕсенче те, тĕлĕнмелле чаплă сулăмлăхра та материал пур, ăна халăх творчестви валли аслă революци пачĕ». Рабочисемпе хресченсем, тесе кăтартса парать И. В. Сталин, шавламасăр тата çуйăхмасăр заводсем тата фабрикăсем, шахтăсем тата чугун çулсем, колхозсем тата совхозсем тăвакансем, пурнăçăн пĕтĕм ырлăхне туса паракансем, пĕтĕм тĕнчене тăрантаракансем тата тумлантаракансем,—акă камсем çĕнĕ пурнăç тăвакансем тата чăн-чăн паттăрсем.

Коммунистсен партийĕ совет çыннисене харпăр хăй ĕçĕ çине яланах тÿрĕ кăмăлпа, коммунизмла туйăмпа пăхма, хамăрăн аслă ĕçре çирĕп дисциплинăллă пулма, ĕçре пĕтĕм вăй-хăватпа пултарулăха палăртма воспитани панă, çакăншăн халĕ те пирĕн парти куллен тăрăшать. Ĕçсыннисен коммунизмла ăнланулăхĕ ÿсни, социализмла ăмăртупа стахановла юхăм çÿлерех те çÿлерех пусăма çĕкленни, халăх хуçалăхĕ малалла хăватлăн аталанса пыни,—çаксем вĕсем пирĕн парти воспитанипе организациллĕ ĕçсене анлăн туса пынине кăтартса параççĕ.

Совет çĕршывĕ социализмран майĕпен коммунизма куçас аслă задачăна пурнăçласа пырать. Хальхи вăхăтра халăхăн ăнланулăхне ÿстерес, ĕçсыннисене халăх хуçалăхĕн кирек хăш участокĕнче те ĕçе тÿрĕ кăмăлпа, коммунизмла туйăмпа туса пыма воспитани парас задачăн пĕлтерĕшĕ нихçанхинчен те ытларах пысăкланать. Парти организацийĕсен хăйсен нумай енлĕ пĕтĕм ĕçне çав задачăна пурнăçлас тĕллевпе туса пырас пулать. Вĕсен ĕç дисциплинине çирĕплетес, ĕçсыннисен пуçарулăхĕпе творчествăлла активлăхне вăйлатас тесе куллен тăрăшмалла. Социализмла ăмăрту вăйланса пынă май çуралса тухакан ĕçри çĕнĕ меслетсене, патриотла çĕнĕ пуçарусене сарса тата аталантарса пырас пулать.

Пирĕн обществăри çынсен ăс-тăнĕнче капитализм юлашкисем, ĕç çине ĕлĕкхи пек кивĕлле пăхни тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтменни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Уйрăм рабочисем тата колхозниксем хăйсен таса тивĕçĕ çине пĕтĕм ответлăха туйса тÿрĕ кăмăлпа пăхмаççĕ-ха. Вĕсем ĕç дисциплинине пăсни, социализмла харпăрлăха типтерлĕ тыткаламанни те пулать. Пирĕн хушăмăрта наянсемпе кахалсем, сахал ĕçлес те ытларах илес текен çынсем, халăх пурлăхне çаратакансем, социализмла обществăри йĕркесене пăсакансем те пур-ха. Çавнашкал çынсене тÿрĕ çул çине тухма пулăшасси, кирлĕ пулсан, вĕсене совет законĕсем тăрăх ответ тыттарасси государство органĕсен, пĕтĕм халăхăн тивĕçĕ пулса тăрать.

Совет çыннисене обществăлла, социализмла пурлăха тирпейлĕ тытса усрама, харпăр хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа туса пыма воспитани парассишĕн пирĕн яланах ывăнма пĕлмесĕр тăрăшас пулать. Кашни рабочие, колхозника тата ытти ĕçсыннисене çакна ăнлантарса пани кирлĕ: ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыманни, ĕç тухăçлăхне ÿстерме тата халăх пурлăхне нумайлатма тăрăшманни—пирĕн пĕтĕмĕшле ĕçе, совет халăхне, хамăр государствăна сиен кÿрет.

Парти, профсоюз, комсомол тата хуçалăх организацийĕсен чи таса тивĕçĕ вăл — ĕçсыннисене çитменлĕхсемпе, ĕç дисциплинине пăсакансемпе килĕшмесĕр кĕрешме воспитани парасси. Ĕç тата государство дисциплинине пăсни политикăллă сыхăлăха çухатасси патне илсе пыни çинчен те манма юрамасть. Ĕçри дисциплинăна çирĕплетес тени прогулсене, ĕçе юлса пынине пĕтерес тенине кăна мар пĕлтерет, вăл çавăр карса ларакансене хирĕç хаярран кĕрешме, политикăллă сыхăлăха ÿстерме предприятисенче е колхозсенче хуçасăрлăхпа йĕркесĕрлĕхе пĕтерме ĕçсыннисене воспитани парас тенине те пĕлтерет.

Хальхи вăхăтра пирĕн республика умĕнче питĕ пысăк ĕç тăрать: çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илсе, ăна хăвăрт тата лайăх ирттермелле тăвас пулать. Колхозсенче, МТС-сенче ĕç дисциплинине çирĕплетни, ялхуçалăх артель Уставне çирĕп пурнăçласа пыни социализмла ялхуçалăхĕ умне парти кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама кирлĕ услови пулса тăрать.

Ĕçри дисциплинăна куллĕн çирĕплетсе, йĕркелĕхе тата политикăллă сыхăлăха пĕрмай ÿстерсе, совет çыннисем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас ĕçре хăйсен вăй-хăватне темиçе хут ытларах ÿстерĕç.

Максим Горькие хисеплесе

Республикăри ĕçсыннисем вырăссен аслă писателĕ, совет литературин никĕсне хывнă М. Горький çуралнăранпа 85 çул тултарнине чыслăн паллă тăваççĕ. Хуласенчи, ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче аслă писателĕн пурнăçĕпе вилĕмсĕр ĕçĕсене, М. Горькийпе В. И. Ленин тата И. В. Сталин хушшинчи çирĕп туслăха кăтартакан кĕнекесемпе фотоÿкерчĕксенчен выставкăсемпе витринăсем тунă.

Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăра «В. И. Ленинпа И. В. Сталин М. Горький çинчен», «М. Горький—мирпе демократишĕн кĕрешекен» темăсем тăрăх выставкăсем тунă. Мартăн 29-мĕшĕнче литература вечерĕ ирттерĕççĕ.

Çĕрпÿ, Канаш, Улатăр тата ытти хуласемпе район центрĕсенчи библиотекăсенче, колхозсенчи вулав çурчĕсемпе клубсенче те витринăсемпе выставкăсем тунă. Чылай çĕрте çак кунсенче Горький произведенийĕсем тăрăх вулакансен конференцийĕсем пулса иртеççĕ.

А. М. Горький çуралнăранпа 85 çул тултарчĕ

* * *

Аслă писатель

Тĕнчери литературăра эксплуататорсен влаçĕ киревсĕр иккенне лайăх ăнланакан, халăха чунтан хĕрхенекен, пусмăрçăсене кураймаан геройсем сахал мар сăнланса юлнă. Вĕсем тĕрлĕ вăхăтри пурнăçа кăтартса параççĕ. Анчах та тĕнчене улăштарассишĕн кĕрешекен чăн-чăн геройсене, социаллă тĕрĕслĕх патне тÿрĕ çулпа утакан паттăрсене вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький пуçарнă социализмлă искусство, пролетариат искусстви çеç пĕтĕм этемлĕхе кăтартса панă. Горький сăнласа кăтартнă хăйне-хăй хĕрхенмен ырă чунлă Данко, паттăр Сокол, хăюллă Тăвăл хыпарçи ĕçсыннисен чун-чĕринчи ирĕклĕхшĕн хыпса çунас, унăн тăшманĕсене кураймипулас шухăш-кăмăла вăратнă. Вырăс рабочи-большевик Павел Власовпа унăн юлташĕсен сăнарĕсем этемлĕхĕн художествăллă ÿсĕмĕнче çĕнĕ тапхăр пуçласа янă, вĕсем пусмăрта пурăнакан массăсене хăйсен пусмăрçисене хирĕç революциллĕ кĕрешĕве тухма вĕрентнĕ.

Умри тĕллев таса та ырă пулни, ăна витĕр курса тăни, кĕрешÿре хăйне хĕрхенменни тата çирĕп пулни, революциллĕ шухăш-кăмăла пикам та хуçма пултараймманни тата Ленинпа Сталинăн аслă ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр парăнни, çивĕч те тимлĕ пулни, тăшманпа нихçан та килĕшменни, ăна яланах чун-чĕререн кураймасăр тăни—çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ пролетариатăн генийллĕ художникĕ тĕнчери литературăна кĕртнĕ çĕнĕ геройăн сăн-сăпатне кăтартса паракан тĕп уйрăмлăхсем.

Павел Власов малтанхи хут шăранса тухнă большевикла хурçăран çуралса ÿснĕ паттăр. Ун хыççăн хурçă пек çирĕп геройсен çĕнĕ ăрăвĕ ÿссе çитĕннĕ—Павел Корчагин, Олег Кошевой, Александр Матросов, Зоя Космодемьянская тата ленинла-сталинла çамрăк гвардин пин-пин геройĕ. Горькилле аслă вăй-хăват генийллĕ писатель хăй аллипе çырса хăварнă произведенисенче çеç мар, унăн ученикĕсен, Горькирен вĕренсе унăн мухтавлă традицийĕсене малалла илсе пыракан писательсен, тĕнчери чи малта тăракан, чи идейăллă литература—совет литератури мастерĕсен творчествинче те пурăнать.

«Иккĕленмелли çук, Горький—çав тери пысăк художествăллă талант, вăл пĕтĕм тĕнчери пролетарилле движение нумай усă кÿнĕ, малашне те усă кÿрĕ»,—тесе çырнă В. И. Ленин 1917 çулта. (Соч., 23 т., 325 стр.).

Максим Горький калавĕсемпе повеçĕсем, поэмисемпе юррисем, пьесисемпе романĕсем, памфлечĕсемпе статьисем ĕçсыннисене мухтакан чаплă гимн пулса тăраççĕ. Аслă Сталин ырласа каланине тивĕçлĕ пулнă «Хĕрпе вилĕм» поэма; революциллĕ кĕрешĕве хĕруллĕн чĕнекен хăюллă Соколпа Тăвăл хыпарçи çинчен хунă юрăсем: вырăс рабочин пуян ăс-тăнĕпе шухăш-кăмăлне искусствăра чи малтан тата пĕтĕм тĕнчене кăтартса панă «Мещенсем» пьеса; Уолл-стритри Сарă Шуйттанăн тискер кайăкла ирсĕр ăшчикне кăтартса паракан Америка çинчен çырнă очерксемпе памфлетсем; Россия тĕнчери чи çутă демократиллĕ çĕршыв пулса тăрасси çинчен тахçан малтанах пророкла пĕлтернĕ «Амăшĕ» ятлă роман; буржуалла тĕнчене пĕтме истори хăй пÿрнине анлăн кăтартса паракан «Клим Самгин пурнăçĕ» ятлă эпопея; пролетарилле гуманизмăн принципĕсене чаплăн пĕлтернĕ тата сыхă та тимлĕ пулма, тăшмана ним хĕрхенмесĕр пĕтерме чĕнекен «Тăшман парăнмасан,—ăна пĕтереççĕ» ятлă паллă статья.—Горькин кашни произведенийĕ ĕçсыннине мухтанипе пĕрлех капиталистсемпе помещиксен çынна кураймаан йĕркине хирĕç пирĕн ăшра, пирĕн чун-чĕрере таса та хаяр курайманлăх çуратать.

Генийллĕ юрăçă, революцин Тăвăл хыпарçи демократипе социализм çĕнтерессишĕн паттăрран кĕрешнĕ аслă Горький яланах ĕçсыннисен ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пыракан аслă кĕрешÿре, кивĕ тĕнчене аттакăлакансен малти ретĕнче пулнă. Горькин çав тери вирлĕ сатири вырăс пролетариачĕн тăшманне—юнлă самодержавине, мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисен хаяр тăшманне тĕнчери империализма шăпах тĕл тата хăватлăн пырса çапнă.

Америка çинчен çырнă хăйĕн очеркĕсемпе памфлечĕсенче Горький буржуалла пропагандăпа реклама сарнă суя сăмаха—«Çĕнĕ тĕнче», океан леш енчи çĕршыв,—демократипе ирĕклĕх çĕршывĕ пулса тăрать, тесĕ калакан суя юмаха çапса аркатнă. Капитализмла Америка монополиллĕ капитал—Сарă Шуйттан патшалăхĕ пулса тăнине, çав çĕршывран Уолл-стрит ĕçсыннисен, вăй-халран кайнă чурасен тĕрми туса хунине Горький илемлĕ литературăра чи малтан тата çур ĕмĕре яхăн ĕлĕкрех кăтартса панă. Уолл-стритри тискер эсремет ун чухнех пĕтĕм тĕнчене хăй аллине çавăрса илме тăрăшнă. Унăн вăрăм тăсăлакан аллисем, Горький çырса кăтартнă пек, «Пĕтĕм çĕр чăмăрне ярса тытнă, ăна хăйĕн пысăк, хура çăварĕ патне çывхартнă, çав тĕпсĕр хура çăвар пирĕн планетăна, кăвар ăшĕнчен тин кăларнă вĕри çĕрулмине кышланă пек, ирсĕр сĕлекине юхтарса кышлать, ĕмет, чăмлать...»

Совет самани вăхăтĕнче Горький хăйĕн художествăллă тата публицистикăллă пĕтĕм пултарулăхне çĕнĕ тĕнче интересĕсене пур вăйран хÿтĕлес тата кивĕ тĕнчене хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешес ĕçе панă. Пролетари писателĕ империализма шыçăнса кайнă капитализм тесе, çав чир ăна вилĕм патне илсе çитерет тесе, ленинла характеристика панă. «Мĕнпур капиталистсен ĕçĕ пĕтĕм тĕнчипех пĕрешкел», тенĕ вăл. Капиталистла мĕнпур пĕрлĕшÿсен, корпорацисемпе ушкăнсен «пĕрешкел ĕçĕ» вăл—ытларах пуяссишĕн хыпăнса çунни, пысăк тупăш илес шутпа ĕçсыннисене этемле мар эксплуатацилени, ытти çĕршывсене пусмăрласа, çаратса пурăнни, пĕр вăрçă хыççăн тепĕр çĕнĕ вăрçă чĕртсе яни, тесе шутланă Горький. «Вăрçă капиталистсемшĕн тупăшлă, вĕсем хĕçпăшалпа сут тăваççĕ, рабочисен юнĕпе татах та ытларах пуяççĕ»,—тесе хаярран çырнă Горький 1930 çулта рабочисемпе хресченсене чĕнсе каланă çырăвĕнче. Америкăри империалистла вăрă-хурахсем, Уолл-стритшăн чи тупăшлă пулса тăракан çĕнĕ тĕнче вăрçи чĕртсе ярас шутпа, хăйсен çĕршывĕнче тата Европăри капитализмлă çĕршывсенче расистла идеологи сарма тата фашистла режим туса хума тăрăшнине Горький хаярран питлесе тăрă шыв çине кăларнă.

Пролетарилле аслă гуманист тухса каланă сăмахсенче яланах çак шухăш уççăн палăрса тăнă: «буржуази культурăна хирĕç тăрать тата вăл халь ăна хирĕç тăмасăр пурăнма та пултараймасть», этемлĕх капитализмран нимĕнле ырă япала та кĕтме пултараймасть, мĕншĕн тесен капиталистшăн «доллар яланах этемрен хаклăрах, çав этем кирек кам пулсан та—çав-çавах». Империализм урса кайнине тата вăл этемлĕхшĕн социаллă хăрушлăх кÿрсе тăнине Горький чи малтанах империалистла лагерь Совет Союзĕн мирлĕ политикине, вăл пĕтĕмĕшпех е кăштах та пулин хĕçпăшалсăрланма сĕннине яланах сĕмсĕррĕн сире-сире ятинче курса тăнă.

Горький, яланах интернационалист пулса, тĕнчери халăхсем Америка империализмне, унăн вăрă-хурахла «цивилизацине», аслă писатель калашле, пирĕн планета çинчи чи пăсăк, чи киревсĕр цивилизацине хирĕç тăрасси ытларах та ытларах ÿссе, вăйланса пынине яланах ырă кăмăлпа сăнаса тăнă. Горький хĕвелтухăçĕнчи халăхсем, пуринчен малтан аслă Китай халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн, Англипе Америка пуç пулса тăрассинчен хăтăлассишĕн паттăррăн кĕрешнине хĕруллĕн саламланă, хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче пурăнакан ĕçсыннисене ирĕклĕхшĕн тата хăйсен нацин нийçама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре çав тери пысăк моралллĕ пулăшу парса хавхалантарса тăнă.

Ленинпа Сталинăн вилĕмсĕр идейисемпе витĕрех çуталса тăракан Горький творчестви пире яланах пит сыхă та тимлĕ пулма вĕрентнĕ, халĕ те вĕрентет. Тĕнчери капитализм пирĕн совет çĕршывĕ унăн колонийĕ пулса тăнине курасшăн, тесе аслă писатель совет çыннисене пĕр хут çеç мар асăрхаттарнă. Горький пирĕн çĕршывра вăрттăн «ĕçлесе» пурăнакан сутăнчăксемпе предательсем хăйсен хуçисемпе—Европăри тата Америкăри капиталистсемпе тÿррĕнех çыхăнса тăнине кăтартса панă. Пирĕн чаплă Тăван çĕршыва хирĕç кĕрешме пăрахман, хĕçпăшалсăрланман ирсĕр тăшмансене Горький хаярран, нимĕн хĕрхенмесĕр çапса аркатма чĕннĕ.

Социализмлă çĕршывăн çулăмлă патриочĕ Совет Союзĕ тунă пĕтĕм тĕнчипе паллă çитĕнÿсемпе вĕçĕ-хĕррисĕр савăнса мухтаннă. Вăл социализмлă революци кÿнĕ чи пысăк та чаплă çитĕнÿсенчен пĕри—Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕ çĕнĕ çын пулса тăрать, тенĕ. «Манăн савăнăçăмпа мухтавăм—çĕнĕ вырăс çынни, çĕнĕ государство тăвакан çын», тесе каланă А. М. Горький Октябрьти Социализмлă Аслă революци вунă çул тултарнă ятпа çырнă хăйĕн статьинче. Çав çĕнĕ çын, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, коммунизм строительствин çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне паттăррăн утать. Çĕр çинче вăл чи çутă демократи туса хучĕ. Вилĕмсĕр Горький хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пурнăçне çак аслă ĕçшĕн панă.

И. УСПЕНСКИЙ,
СССР Наукăсен Академийĕн А. М. Горький ячĕпе тăракан тĕнчери литература институчĕн сотрудникĕ.



А. М. Горький.

А. М. Горькие асăнса

Совет халăхĕ, мĕнпур çĕршывсенчи прогрессивлă çынсем аслă вырăс писателĕн Алексей Максимович Горькин çутă ятне хисеплесе асăнаççĕ. Генийллĕ художникăн чаплă пултарулăхĕ тĕнче литературин ылтăн фондне кĕрсе вырнаçрĕ.

Мускавра, А. М. Горькин литература архивĕнче 84 пин ытла тĕрлĕ документсем сыхланса усранаççĕ. Вĕсем хушшинче нумай художествăллă произведенисен алçырăвĕсем, публицистикăллă тата литературăллă-критикăллă статьясем, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх çырнă заметкăсем, хăй каланă сăмахсен текстчĕсем, тĕрлĕ çынсемпе коллективсем патне янă пиншер çырусем, Горький патне хăйĕн корреспонденчĕсем çырса янă вуншар пин çырусем. Архивра тĕрлĕ авторсен алçырăвĕсем пине яхăн. Вĕсем çинче чылайăшĕнче Алексей Максимович палăртнă тата тÿрлетнĕ вырăнсем пур.

Литература архивĕнчи документсем социализмла реализм литературине пуçласа янă писатель-революционерăн, халăх телейĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн çулăмлă кĕрешнĕ писателĕн пурнăçĕ çинчен, хавхаланулă творчестви çинчен, вĕресе тăракан обществăлла ĕçĕ çинчен каласа параççĕ.

А. М. Горький произведенийĕсем—60 çул каярах пичетлесе кăларнă «Макар Чудра» ятлă малтанхи калавран пуçласа «Клим Самгин пурнăçĕ» ятлă пысăк эпопея таран анлă халăх масси тивлечĕ пулса тăчĕç. Совет влаçĕ пуçланнăранпа пирĕн çĕршывра А. М. Горький произведенийĕсене 2.023 хутчен 72 миллион та 500 пин экземпляр таран 71 халăх чĕлхипе кăларнă. Унăн «Амăшĕ» ятлă кĕнекине 148 хутчен пурĕ 4 миллиона яхăн тиражпа кăларнă. Автобиографиллĕ произведенисене те нумай хут пичетлесе кăларнă. Унăн «Ача чухне» ятлă повеçне 116 хут, «Манăн университетсем» ятлă кĕнекине 81 хут пичетлесе кăларнă.

А. М. Горький кĕнекисене миллионшар совет çыннисем пĕлеççĕ тата вĕсене юратса вулаççĕ. Унăн художествăллă произведенийĕсем совет çыннисене Тăван çĕршыва, паттăр Ленин—Сталин партине юратма вĕрентеççĕ, хамăр Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме чĕнеççĕ.

* * *

БАКУ. Азербайджан республикинчи ĕçсыннисем аслă писатель А. М. Горький творчествине юратаççĕ. Баку нефтяникĕсем, литературăна наука работникĕсем А. М. Горький çуралнăранпа 85 çул тултарнине анлăн палăртаççĕ. Горький ячĕпе тăракан библиотека, культура дворецĕсемпе клубсем промыслăсенче; предприятисенчи цехсенче, общежитисенче сăмах ăсталăхĕн—генийлле писателĕн пурнăçĕпе произведенийĕсем çинчен каласусем ирттереççĕ.

Низами музейĕ пысăк выставка организациленĕ, унта 500 ытла экспонат тăратнă. «А. М. Горький Азербайджанра» ятлă пайра А. М. Горький Баку Совечĕн савăнăçлă ларăвĕнче пулнине, вăл Бакури рабкорсемпе каласнине кăтартакан фотоÿкерчĕксем тăратнă, аслă писатель кивĕ Бакупа çĕнĕ Баку çинчен каланă сăмахсене çырса хунă, унăн азербайджан чĕлхипе куçарса кăларнă кĕнекисене тăратнă.

Совет влаçĕ пуçланнăранпа А. М. Горький произведенийĕсене Азербайджан чĕлхипе 40 хутчен пурĕ 250 пин экземпляр тиражпа кăларнă. «Амăшĕ», «Артамоновсен ĕçĕ», çавăн пекех «Ача чухне», «Çынсем хушшинче», «Манăн университетсем» ятлă трилогине тата публицистикăллă статьисене пысăк тиражпа пичетлесе кăларнă.

* * *

ХАРЬКОВ. Енер Короленко ячĕпе тăракан библиотекăра А. М. Горькие асăнса выставка уçнă. Выставка виçĕ пайран тăрать: «В. И. Ленинпа И. В. Сталин Горький çинчен», «Горький—писатель-патриот», «Горький—мирпе демократишĕн кĕрешекен борец». Выставкăна А. М. Горькин вырăсла тата украинла кăларнă произведенийĕсене, унăн творчестви çинчен калакан критикăллă-библиографиллĕ статьясем нумай тăратнă. Библиотекăн научнăй сотрудникĕсем заводсенче писатель творчестви çинчен лекцисем ирттереççĕ.

Горький ячĕпе тăракан университетра филологи факультечĕн вырăс литературин кафедрин ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта А. М. Горький творчествин совет литератури историйĕнчи пĕлтерĕшĕ çинчен доклад тунă.

Культура дворецĕсенче, клубсенче аслă писатель-патриота асăнса литература каçĕсем ирттереççĕ.

* * *

СМОЛЕНСК. Ленин ячĕпе тăракан библиотекăра совет литературин никĕсне хывнă А. М. Горький ячĕпе выставка уçăлнă. Выставкăна Горький Смоленскра пулни çинчен, вăл хулари рабочисемпе тата интеллигенципе çыхăну тытса ĕçлени çинчен каласа паракан кĕнеке тăратнă.

Смоленскри медицина институчĕн сурчĕ çине мемориальнăй хăма çапса хунă. Унта çапла çырнă: «Çак çуртра 1899 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче пролетарилле аслă писатель А. М. Горький хăйĕн произведенийĕсене вуласа панă».

Смоленск облаçĕнчи ĕçсыннисем пролетарилле писателĕн паттăр сăнарне хăйсен чĕринче усраççĕ.

Мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС).

И. СТАЛИН

ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем

Экономикӑлла дискуссие хутшӑннӑ юлташсене.

1951 ҫулхи ноябрьте пулнӑ дискуссипе ҫыхӑнса тӑракан экономикӑлла ыйтусем пирки асӑрхаттарнисем

4. Хулапа ял хушшинчи, ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи хире-хирӗҫлӗхе пӗтересси ҫинчен тӑракан ыйту, ҫавӑн пекех тата вӗсем хушшинчи уйрӑмлӑхсене пӗтересси ҫинчен тӑракан ыйту.

(Малалли. Пуҫламӑшӗ «Коммунизм ялавӗн» иртнӗ номерӗнче).

Хулапа (промышленноҫпа) ял (ялхуҫалӑхӗ) хушшинчи, вӑй-хал ӗҫлевӗпе ӑс-тӑн ӗҫлевӗ хушшинчи уйрӑмлӑхсем пӗтесси ҫинчен тӑракан проблемӑн характерӗ пачах урӑхла. Марксизм классикӗсем ку проблемӑна лартман. Ҫакӑ вӑл—пирӗн социализм строительствин практики лартнӑ ҫӗнӗ проблема.

Ҫак проблема юриех шухӑшласа кӑларнӑ проблема пулса тӑмасть-и, унӑн пирӗншӗн усӑллӑ, мӗнле те пулин практикӑллӑ е теориллӗ пӗлтерӗш пур-и? Вӑл проблемӑна юриех шухӑшласа кӑларнӑ теме юрамасть. Пачах урӑхла, вӑл пирӗншӗн питех те кирлӗ проблема пулса тӑрать.

Тӗслӗхрен, ялхуҫалӑхӗпе промышленность хушшинчи уйрӑмлӑха илес пулсан, ҫакӑ курӑнать: пирӗн ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫлев условийӗсем промышленноҫри ӗҫлев условийӗсенчен уйрӑлса тӑраҫҫӗ кӑна мар, пирӗн промышленноҫри производство хатӗрӗсемпе производство туса кӑларакан продукци чи малтан тата пуринчен ытла пӗтӗм халӑх харпӑрлӑхӗ пулса тӑрать; ҫав вӑхӑтрах ялхуҫалӑхӗнчи харпӑрлӑх—пӗтӗм халӑх харпӑрлӑхӗ мар, вӑл ушкӑн харпӑрлӑхӗ, колхозла харпӑрлӑх пулса тӑрать. Ку вӑл тавар сутса илесси ҫаплах юласси патне илсе пырать, промышленноҫпа ялхуҫалӑх хушшинчи ҫав уйрӑмлӑх пӗтсен ҫеҫ тавар производстви те хӑйӗн мӗнпур паллисемпе пӗтет тесе каланӑччӗ ӗнтӗ. Ҫапла вара, ялхуҫалӑхӗпе промышленность хушшинчи ҫав пысӑк уйрӑмлӑх пӗтни пирӗншӗн питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине йышӑнмасӑр тӑма ҫук.

Ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑха пӗтересси ҫинчен тӑракан проблема пирки те ҫавнах калас пулать. Ку проблема та пирӗншӗн питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Социализмла ӑмӑрту массӑллӑн сарӑлма тытӑниччен пирӗн промышленность ӳсӗмӗ йывӑррӑн пычӗ, нумай юлташсем вара промышленность ӳсӗмӗн хӑвӑртлӑхне вӑрахлатасси ҫинчен те ыйту лартрӗҫ. Ҫакӑ вӑл, тӗпрен илсен, рабочисен культурӑлла-техникӑлла шайӗ ытла та ҫителӗксӗр пулниччен тата вӑл инженерсемпе техниксен шайӗнчен нумай юлса пыниччен килнӗ. Анчах социализмла ӑмӑрту пирӗн патра массӑллӑ пулса тӑнӑ хыҫҫӑн ӗҫ тӗпренех улшӑнчӗ. Шӑпах ҫакӑн хыҫҫӑн промышленность пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе малалла кайрӗ. Мӗншӗн социализмла ӑмӑрту массӑллӑ пулса тӑчӗ? Мӗншӗн тесен, рабочисем хушшинче техникӑлла минимума вӗренсе ҫитнӗ кӑна мар, тата малалла та иртсе кайнӑ нумай ушкӑнсем пулса тӑчӗҫ, вӗсем инженерсемпе техниксен шайне ҫити ҫӗкленчӗҫ, техниксемпе инженерсене тӳрлетме пуҫларӗҫ, ӗҫри нормӑсене кивелнӗ пирки ҫӗмӗрме тытӑнчӗҫ, хальхи вӑхӑта юрӑхлӑ ҫӗнӗ нормӑсене ӗҫе кӗртме пуҫларӗҫ тата ытти те. Хӑйсен культурӑлла-техникӑлла шайне рабочисен уйрӑм ушкӑнӗсем ҫеҫ мар, рабочисен ытларахӑшӗ инженерсемпе техниксен шайӗ таран ӳстерне пулсан, мӗн пулнӑ пулӗччӗ-ха? Пирӗн промышленность аталанӑвӗ ытти ҫӗршывсен промышленноҫӗ ҫитме пултарайман виҫене ҫитнӗ пулӗччӗ. Ҫапла вара, ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑха рабочисен культурӑлла-техникӑлла шайне инженерсемпе техниксен шайӗ таран ҫӗклениепе пӗтерни пирӗншӗн питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине йышӑнмасӑр тӑма ҫук.

Хӑшпӗр юлташсем ҫапла калаҫҫӗ: пурӑна-киле промышленноҫпа ялхуҫалӑх хушшинчи, вӑй-хал ӗҫлевӗпе ӑс-тӑн ӗҫлевӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑх кӑна мар, вӗсем хушшинчи **кирек мӗнле** уйрӑмлӑх та пӗтет, теҫҫӗ. Ҫапла калани тӗрӗс мар. Промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑха пӗтерни вӗсем хушшинчи кирек мӗнле уйрӑмлӑха та пӗтересси патне илсе пыма пултараймасть. Промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫ условийӗсен уйрӑмлӑхӗсене пула мӗнле те пулин уйрӑмлӑх, вӑл пысӑках мар пулин те, юлатех. Промышленноҫра та, унӑн тӗрлӗ отраслӗсене асра тытас пулсан, ӗҫ условийӗсем пур ҫӗрте те пӗр пек мар: шахтӗрсен ӗҫ условийӗсем, сӑмахран, механизациленӗ атӑ-пушмак фабрикинчи ӗҫ условийӗсенчен уйрӑлса тӑраҫҫӗ, тимӗр-тӑмӑр тӑпри чавакан рабочисен ӗҫ условийӗсем машинӑсем тӑвакан заводри рабочисен ӗҫ условийӗсенчен уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Ҫакӑ тӗрӗс пулсан, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ хушшинче хӑшпӗр уйрӑмлӑх юлмаллах ӗнтӗ.

Ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи уйрӑмлӑх пирки те ҫавнах калас пулать. Вӗсем хушшинче *культурӑлла-техникӑлла шай тӗлӗшпе пулнӑ тӗп уйрӑмлӑх* пӗтетех ӗнтӗ. Анчах мӗнле те пулин уйрӑмлӑх, пысӑках мар уйрӑмлӑх пулин те, ҫапах та юлатех, мӗншӗн тесен предприятисенче ертсе пыракан работниксен ӗҫ условийӗсем рабочисен ӗҫ условийӗсемпе пӗр пек мар.

Урӑхла шутлакан юлташсем эпӗ тухса каланӑ хӑшпӗр сӑмахсенчи пурте пӗлекен формулировкӑпа усӑ кураҫҫӗ пулмалла, унта промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ хушшинчи, ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи уйрӑмлӑх пӗтесси ҫинчен каланӑ, унта сӑмах кирек мӗнле уйрӑмлӑха та мар, тӗп уйрӑмлӑха пӗтересси ҫинчен пынине асӑрхаттарман. Юлташсем манӑн формулировкӑна шӑпах ӗнтӗ ҫавӑн пек ӑнланнӑ та, вӗсем ҫав формулировка кирек мӗнле уйрӑмлӑха та пӗтересси ҫинчен калать тесе шутланӑ. Анчах ку ӗнтӗ формулировка ҫителӗксӗр пулнине, тӗрӗсех мар пулнине пӗлтерет. Ана пӑрахӑҫа кӑлармалла та промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ хушшинчи, ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑхсене пӗтересси ҫинчен тата вӗсем хушшинче пысӑках мар уйрӑмлӑхсем сыхланса юласси ҫинчен калакан формулировкӑпа улӑштармалла.

5. Тӗнчери пӗрлӗхлӗ рынок пайланса кайни ҫинчен тата тӗнчери капитализм системин кризисӗ тарӑнланса пыни ҫинчен тӑракан ыйту.

Тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑн тата вӑл хуҫалӑхра тунӑ улшӑнусен экономикӑлла чи паллӑ результачӗ тесе тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсене ҫыхӑнтарса тӑракан пӗрлӗхлӗ рынок пайланса кайнине шутлас пулать. Ҫакӑ вӑл тӗнчери капитализмла йӗркен пӗтӗмӗшле кризисне малалла тарӑнлатрӗ.

Тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ хӑй те ҫав кризиса пула пуҫланса кайрӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пӗр-пӗринпе тытӑҫса ӳкнӗ капитализмла икӗ коалицирен кашниех хӑйӗн тӑшманне аркатса тӑкма тата тӗнчере пуҫпулса тӑма шутланӑ. Ҫакӑнта вӗсем кризисран тухмалли ҫула шыранӑ. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хӑйсен чи хӑрушӑ конкуренчӗсене, Германипе Японие, йӗркерен кӑларма, урӑх ҫӗршывсенчи рыноксене, чӗртаварӑн тӗнчери ресурсӗсене туртса илме тата тӗнчере пуҫпулса тӑма шутланӑ.

Анчах та вӑрҫӑ вӗсен ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртме пулӑшмарӗ. Чӑн та, капитализмла виҫӗ тӗп ҫӗршывӑн: США-н, Англин, Францин конкуренчӗсем пулса тӑракан Германипе Японие вӑрҫӑ йӗркерен кӑларчӗ. Анчах ҫав вӑхӑтрах капитализмла системӑран Китай тата Европӑри ытти халӑх демократи ҫӗршывӗсем уйрӑлса кайрӗҫ, вӗсем Совет Союзӗпе пӗрле мирпе демократин пӗрлӗхлӗ хӑватлӑ лагерьне туса хучӗҫ, вӑл лагерь капитализм лагерьне хирӗҫ тӑрать. Пӗр-пӗрне хирӗҫле икӗ лагерь пулса тӑнин экономикӑлла результачӗ ҫакӑ пулать: тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсене ҫыхӑнтарса тӑракан пӗрлӗхлӗ рынок пайланса кайрӗ, ҫакна пула эпир тӗнчере пӗр-пӗринпе юнашар икӗ рынок пулса тӑнине куратпӑр, ҫак рыноксем те пӗр-пӗрне хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

Ҫакна палӑртмалла: США тата Англипе Франци тӗнчере ҫавӑн пек юнашар тӑракан ҫӗнӗ рынока пулса ҫирӗпленме, паллах, ун пек тӑвас мар тенӗ ҫӗртенех, хӑйсем пулӑшрӗҫ. Вӗсем ССР Союзне, Китая тата Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсене, «Маршалл планӗн» тытӑмне кӗменскерсене, экономика енӗпе блокада турӗҫ, ҫапла майпа вӗсене пӑвса пӑрахма шутларӗҫ. Чӑннипе илсен, тӗнчери ҫӗнӗ рынока пӑвса пӑрахасси пулмарӗ, вӑл тӗрекленчӗ.

Ҫапах та ку ӗҫӗн тӗп сӑлтавӗ, паллах, экономика енӗпе блокада тунинче мар, ҫак ҫӗршывсем вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта экономика тӗлӗшпе пӗрлешнинче тата экономика енӗпе пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫленинче, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑнинче. Пӗр-пӗринпе ҫавӑн пек килӗштерсе ӗҫленин опычӗ акӑ мӗн кӑтартса парать: халӑх демократи ҫӗршывӗсене Совет Союзӗ чӑнчӑнах паха тата техника тӗлӗшпе квалификациллӗ пулӑшу парса тӑрать, ун пек пулӑшӑва вӗсене капитализмла пӗр ҫӗршыв та парайман пулӗччӗ. Ӗҫ ҫав пулӑшу питех те йӳнӗ тата техника енӗпе чи паха пулнинче кӑна мар. Ӗҫ чи малтан акӑ мӗнре: ҫавӑн пек килӗштерсе ӗҫленин никӗсӗ пӗр-пӗрне тӳрӗ кӑмӑлпа пулӑшма тӑрӑшни тата экономикӑра пӗтӗмӗшле ӳсӗм тума тӑрӑшни пулать. Ҫакна пула ҫав ҫӗршывсенчи промышленность пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе аталанса пырать. Шанчӑклӑнах ҫапла калама пулать: промышленность ҫавӑн пек хӑвӑрт аталанса пырсан, ӗҫ часах ҫакӑн пек пулса тӑрӗ: ҫав ҫӗршывсем капитализмла ҫӗршывсенчен тавар илсе тӑмасӑрах пурӑнӗҫ кӑна мар, вӗсем хӑйсен производстви туса кӑларакан ытлашши таварсене аякка сутса тӑма кирлине те туйса илӗҫ.

Анчах ҫакӑнтан акӑ мӗн тухса тӑрать: капитализмла тӗп ҫӗршывсен (США, Англин, Францин) тӗнчери ресурссемпе усӑ курма вӑй хумалли вырӑнӗсем сарӑлса мар, чакса пырӗҫ, ҫак ҫӗршывсен таварсем вырнаҫтарса тӑмалли тӗнчери рынок условийӗсем япӑхланса пырӗҫ, ҫав ҫӗршывсенчи предприятисем пӗтӗм вӑйпа ӗҫлеймесӗр тӑрасси вӑйланӗ. Тӗрӗссипе илсен, тӗнчери рынок пайланса кайнӑ май тӗнчери капитализмла системӑн пӗтӗмӗшле кризисӗ тарӑнланни ҫакӑнта пулать те ӗнтӗ.

Ҫакна капиталистсем хӑйсем те туяҫҫӗ, мӗншӗн тесен ССР Союзӗ пек, Китай пек рыноксене ҫухатнипе туймасӑр тӑма йывӑр. Вӗсем ҫак йывӑрлӑхсене «Маршалл планӗпе», Корейӑри вӑрҫӑпа, хӗҫпӑшалсем нумай туса кӑларнипе, промышленноҫа вӑрҫӑ валли ӗҫлеттернипе сирсе яма тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах та ку вӑл шыва путакан ҫынсем улӑм пӗрчинчен ярса тытма хӑтланнипе пӗрех.

Ҫакна май экономистсем умне икӗ ыйту тухса тӑчӗ:

а) Сталинӑн тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑччен каланӑ паллӑ тезисӗ, капитализмӑн пӗтӗмӗшле кризисӗн тапхӑрӗнче рыноксем паллӑ таран ҫирӗп тӑни ҫинчен калакан тезисӗ,—халӗ те вӑйра тӑрать теме пулать-и?

б) Ленинӑн 1916 ҫулта ҫуркунне каланӑ паллӑ тезисӗ, капитализм ҫӗрсе пырать пулин те, «капитализм, пӗтӗмӗшпе илсен, ӗлӗкхинчен чылай хӑвӑртрах аталанать» текен тезисӗ,—халӗ те вӑйра тӑрать теме пулать-и?

Ҫапла калама ҫук тесе шутлатӑп эпӗ. Тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫа май пулса тӑнӑ ҫӗнӗ условисене пула ҫав тезиссем иккӗшӗ те ӗнтӗ вӑйран тухнӑ тесе шутлас пулать.

6. Капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласси ҫинчен тӑракан ыйту.

Тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ хыҫҫӑн тӗнчери халӑхсем хушшинче ҫӗнӗ условисем аталаннине пула капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласси пӑрахӑҫа тухрӗ, теҫҫӗ хӑшпӗр юлташсем. Вӗсем ҫакӑн пек шутлаҫҫӗ: социализм лагерӗпе капитализм лагерӗ хушшинчи хирӗҫӳсем капитализмла ҫӗршывсем хушшинчи хирӗҫӳсенчен вӑйлӑрах, теҫҫӗ, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ытти капитализмла ҫӗршывсене пӗр-пӗринпе вӑрҫса пӗр-пӗрне вӑйсӑрлатмалла мар тума ҫителӗклӗ таранах хӑйсене пӑхӑнтарса ҫитерчӗҫ, капитализмӑн малта пыракан ҫыннисем пӗтӗм тӗнчери икӗ вӑрҫӑн, пӗтӗм капитализмла тӗнчене пысӑк сиен кӳнӗ вӑрҫӑсен опычӗ тӑрӑх ҫителӗклӗ таранах вӗренсе ҫитрӗҫ, ҫавӑнпа та вӗсем капитализмла ҫӗршывсем хушшинче ҫӗнӗрен вӑрҫӑ пуҫлама парас ҫук,—ҫаксем пирки ӗнтӗ капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласси пӑрахӑҫа тухрӗ, теҫҫӗ.

Ҫак юлташсем йӑнӑшаҫҫӗ. Вӗсем ҫиелте мӗлтлетсе тӑракан тулашри явленисене кураҫҫӗ, анчах та шалти вӑйсене, халлӗхе курӑнми ӗҫлекен, ҫапах та событисем мӗнле пулса пырассине татса пама тивӗҫлӗ вӑйсене курмаҫҫӗ.

Тулашран пӑхсан пурте «ырӑ» пек: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Хӗвеланӑҫ Европӑна, Японие тата капитализмла ытти ҫӗршывсене паёк ҫине лартрӗҫ; Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен аллине лекнӗ ҫӗршывсем—Германи (Хӗвеланӑҫри), Англи, Франци, Итали, Япони—США хушнисене пӗр сӑмахсӑрах туса пыраҫҫӗ. Анчах та ҫакӑн пек «ырлӑх» «ӗмӗр-ӗмӗрех» тытӑнса тӑма пултарӗ тени, ҫав ҫӗршывсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем пуҫпулса тӑнине тата вӗсен пусмӑрне вӗҫӗмсӗрех тӳссе пурӑнӗҫ, вӑл ҫӗршывсем Америка тыткӑнӗнчен хӑтӑлса тухма тата хӑйсем тӗллӗн аталанас ҫул ҫине тӑма тытӑнса пӑхмӗҫ тесе шутлани йӑнӑш пулнӑ пулӗччӗ.

Чи малтан Англипе Францие илер. Иккӗленмелли ҫук, ку ҫӗршывсем — империализмла ҫӗршывсем. Иккӗленмелли ҫук, йӳнӗ чӗртавар пулни тата тавар вырнаҫтармалли шанчӑклӑ рыноксем пулни вӗсемшӗн питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑраҫҫӗ. «Маршалл планӗ» тӑрӑх «пулӑшу» паратпӑр тесе шавласа, Англипе Францин экономикине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен экономикин хӳрешки тума тӑрӑшса, американецсем вӗсен экономикине кӗрсе пыраҫҫӗ пулсан, Америка капиталӗ Англипе Францин колонийӗсенче чӗртавар вырӑнӗсем тата тавар вырнаҫтармалли рыноксем туртса илет пулсан тата ҫакна май американецсем Англипе Франци капиталисчӗсен пысӑк усламӗсене пӗтерсе хума хатӗрленеҫҫӗ пулсан,—ҫав ҫӗршывсем хальхи пек лару-тӑрӑва вӗҫӗ-хӗррисӗр тӳссе пурӑнӗҫ тесе шутлама пулать-и? Капитализмла Англи, ун хыҫҫӑн вара капитализмла Франци те, хӑйсем тӗллӗн пурӑнас тата, паллах, пысӑк услам илес тесе, пурӑна-киле ирӗксӗрех США ытамӗнчен хӑтӑлма тата США-па хирӗҫме тытӑнӗҫ тесе калани тӗрӗсрех пулмӗ-и?

Вӑрҫӑра парӑнтарнӑ тӗп ҫӗршывсене, Германие (Хӗвеланӑҫри) тата Японие, илсе пӑхар. Ку ҫӗршывсем халӗ Америка империализмӗн пусмӑрӗ айӗнче мӗскӗн пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Вӗсен промышленноҫӗпе ялхуҫалӑхне, вӗсен суту-илӗвне, вӗсен тулашрипе шалти политикине, вӗсен пӗтӗм пурнӑҫне Америка оккупацийӗн «йӗрки» хӗссе лартнӑ. Ҫак ҫӗршывсем ӗнер ҫеҫ-ха империализмла аслӑ державӑсем пулса тӑратчӗҫ, вӗсем Англи, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Франци Европӑра тата Азире пуҫпулса тӑнин никӗсӗсене кисретсе тӑратчӗҫ. Ҫав ҫӗршывсем ура ҫине ҫӗнӗрен тӑма, США тунӑ «йӗркене» аркатма тата хӑйсем тӗллӗн аталанас ҫул ҫине хӑтӑлса тухма тытӑнса пӑхмӗҫ тесе шутлани вӑл—пулма пултарайман ӗҫ пуласса ӗненни пулӗччӗ.

Капитализмпа социализм хушшинчи хирӗҫӳсем капитализмла ҫӗршывсем хушшинчи хирӗҫӳсенчен вӑйлӑрах, теҫҫӗ. Теори тӗлӗшпе илсен, паллах, ҫапла калани тӗрӗс. Ку вӑл халӗ, хальхи вӑхӑтра ҫеҫ мар тӗрӗс,—ҫавӑн пек калани тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ умӗн те тӗрӗс пулнӑ. Ҫакна вара капитализмла ҫӗршывсен руководителӗсем хӑшпӗр таран ӑнланнӑ. Ҫапах та тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ ССР Союзне хирӗҫ пыракан вӑрҫӑран мар, капитализмла ҫӗршывсем хушшинчи вӑрҫӑран пуҫланчӗ. Мӗншӗн? Пӗрремӗшӗнчен, акӑ мӗншӗн: социализм ҫӗршывӗ пулса тӑракан ССР Союзне хирӗҫ пуҫланӑ вӑрҫӑ капитализмшӑн капитализмла ҫӗршывсем хушшинчи вӑрҫӑран хӑрушӑрах, мӗншӗн тесен, капитализмла ҫӗршывсем хушшинчи вӑрҫӑ пӗр-пӗр капитализмла ҫӗршывсем ытти капитализмла ҫӗршывсенчен вӑйлӑрах пулса тӑрасси ҫинчен кӑна ыйту лартать пулсан, ССР Союзне хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ вара капитализм хӑй пуласси-пулас марри ҫинчен пурпӗрех ыйту лартмалла. Иккӗмӗшӗнчен, акӑ мӗншӗн: капиталистсем, пропаганда тӑвас шутпа, ССР Союзӗ агрессиллӗ ҫӗршыв тесе шавлаҫҫӗ пулин те, Совет Союзӗн агрессиллӗхне хӑйсем те ӗненмеҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем Совет Союзӗн мирлӗ политикине шута илеҫҫӗ тата Совет Союзӗ капитализмла ҫӗршывсем ҫине хӑй тапӑнас ҫуккине пӗлеҫҫӗ.

Хӑшпӗр юлташсем халӗ Японипе Германие пӗтӗмпех йӗркерен кӑларнӑ тесе шутланӑ пекех, тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ хыҫҫӑн та Германие пӗтӗмпех йӗркерен кӑларнӑ тесе шутлатчӗҫ. Ун чухне те хаҫат-журналсенче: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Европӑна выҫӑ паёк ҫине лартрӗҫ, Германи текех ура ҫине тӑма пултараймасть, халӗ ӗнтӗ капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑ пулма пултараймасть, тесе шавларӗҫ. Анчах та, ҫакна пӑхмасӑрах, Германи хӑйне парӑнтарнӑ хыҫҫӑн пӗр 15—20 ҫул хушшинчех ҫӗкленчӗ те аслӑ держава пулса тӑчӗ, тыткӑнран хӑтӑлса хӑй тӗллӗн аталанас ҫул ҫине тӑчӗ. Кунта акӑ мӗн характерлӑ: Германие экономика тӗлӗшпе ҫӗкленме тата унӑн ҫарпа экономикин хӑватне аталантарма никам та мар, Англипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем пулӑшрӗҫ. Паллах, Германие экономика тӗлӗшпе ҫӗкленме пулӑшса, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Англи ура ҫине тӑнӑ Германие Совет Союзне хирӗҫ яма, унпа социализм ҫӗршывне хирӗҫ усӑ курма шутланӑ. Анчах та Германи хӑйӗн вӑйӗсене чи малтан Англи-Франци-Америка блокне хирӗҫ ячӗ. Гитлерла Германи Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫма тытӑнсан вара Англи-Франци-Америка блокӗ гитлерла Германи ҫумне пӗрлешмерӗ кӑна мар, пачах урӑхла, унӑн ирӗксӗрех гитлерла Германие хирӗҫ ССР Союзӗпе коалици тумалла пулчӗ.

Ҫапла вара, капитализмла ҫӗршывсем хушшинче рыноксемшӗн тата хӑйсен конкуренчӗсене пӗтерсе лартассишӗн пыракан кӗрешӳ практикӑра капитализм лагерӗпе социализм лагерӗ хушшинчи хирӗҫӳрен вӑйлӑрах пулчӗ.

Ыйту тухса тӑрать: Германипе Япони ура ҫине ҫӗнӗрен тӑмӗҫ, вӗсем Америка тыткӑнӗнчен хӑтӑлма хӑтланса пӑхмӗҫ тата хӑйсем тӗллӗн пурӑнма шутламӗҫ тесе калама мӗнле шанчӑк пур-ха? Кун пек шанчӑксем ҫук, тесе шухӑшлатӑп эпӗ.

Ҫакӑнтан вара акӑ мӗн курӑнать: *капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласси вӑйрах юлать.*

Ленинӑн империализм пурпӗрех вӑрҫӑсем ҫуратни ҫинчен калакан тезисӗ кивелнӗ тесе шутламалла, мӗншӗн тесен халӗ халӑхӑн хӑватлӑ вӑйӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, вӗсем мире хӳтӗлеҫҫӗ, тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫа хирӗҫ тӑраҫҫӗ, теҫҫӗ. Ҫав тезис кивелнӗ тени тӗрӗс мар.

Миршӗн пыракан хальхи юхӑмӑн тӗллевӗ—халӑх массисене мире сыхласа тӑрассишӗн, тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫа сирсе ярассишӗн кӗрешӗве ҫӗклесси пулать. Ҫапла вара, вӑл юхӑм капитализма сирпӗтсе антарас тата социализм тӑвас тӗллев лартмасть, вӑл мире сыхласа хӑварас ӗҫре демократиллӗ тӗллевсем ҫеҫ тытать. Ку тӗлӗшпе хальхи вӑхӑтра мире сыхласа хӑварассишӗн пыракан юхӑм тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ тапхӑрӗнче империализмла вӑрҫа гражданла вӑрҫӑ туса ярассишӗн пынӑ юхӑмран уйрӑлса тӑрать, мӗншӗн тесен тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ тапхӑрӗнчи юхӑм маларах кайнӑ тата вӑл социализмла тӗллевсем лартнӑ.

Кирлӗ пек лару-тӑру пулса тӑрсан, миршӗн пыракан кӗрешӳ хӑшпӗр ҫӗрте социализмшӑн пыракан кӗрешӳ пулса тӑма пултарӗ, анчах та вӑл миршӗн пыракан хальхи юхӑм мар, капитализма сирпӗтсе антарассишӗн пыракан юхӑм пулӗ.

Пуринчен ытларах ҫакӑн пек пулма пултарать: миршӗн пыракан хальхи юхӑм, мире сыхласа хӑварассишӗн пыракан юхӑм, ӑнӑҫлӑ пулас пулсан, ҫак вӑрҫа сирсе яма, ӑна вӑхӑтлӑха чарса лартма, ҫак мире вӑхӑтлӑха сыхласа хӑварма пултарать, вӑрҫӑшӑн тӑракан правительствӑна вырӑнтан кӑларма, ун вырӑнне мире вӑхӑтлӑха сыхлама хатӗр тӑракан урӑх правительство лартма пултарать. Ку, паллах, лайӑх. Питех те лайӑх. Анчах та ҫакӑ капитализмла ҫӗршывсем хушшинче вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласине пӗтӗмӗшпе пӗтерме ҫапах та ҫителӗксӗр-ха. Ҫителӗксӗр, мӗншӗн тесен миршӗн пыракан юхӑмӑн ҫав пӗтӗм ӳсӗмӗсем пулсан та империализм ҫапах та сыхланса юлать, вӑйрах юлать,—ҫапла вара, вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласси те вӑйрах юлать.

Вӑрҫӑсем пурпӗрех пуласине сирсе ярас тесен, империализма пӗтерес пулать.

7. Хальхи капитализмӑн тата социализмӑн экономикӑлла тӗп законӗсем ҫинчен тӑракан ыйту.

Паллӑ ӗнтӗ, капитализмӑн тата социализмӑн экономикӑлла тӗп законӗсем ҫинчен тӑракан ыйтӑва дискуссире темиҫе хут та хускатрӗҫ. Ҫак законсем пирки тӗрлӗ шухӑшсем каларӗҫ, хӑшӗ-пӗрисем фантазиллӗ шухӑшсем те каласа пачӗҫ. Чӑн та, дискусси хутшӑннӑ ҫынсем нумайӑшӗ ҫакӑн пирки хӑйсен шухӑшне уҫҫӑн каламарӗҫ, тата ку тӗлӗшпе нимӗнле решени те палӑртса хӑварман. Ҫапах та, дискусси хутшӑннӑ ҫынсенчен никам та ҫавӑн пек законсем ҫук тесе каламарӗ.

Капитализмӑн экономикӑлла тӗп закон пур-и? Ҫапла, пур. Мӗнле закон-ха вӑл, мӗнре пулаҫҫӗ-ха унӑн характерлӑ паллисем? Капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ вӑл—капитализмла производство аталанӑвӗн мӗнле те пулин уйрӑм енне мар е мӗнле те пулин уйрӑм процесӗсене мар, ҫав аталанӑвӑн мӗнпур тӗп енӗсемпе мӗнпур тӗп процесӗсене палӑртса тӑракан закон,—ҫапла вара, вӑл капитализмла производствӑн ӑшчиккине, унӑн тупсӑмне палӑртса тӑрать.

Хаклӑх законӗ капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ пулса тӑмасть-и? Ҫук, пулса тӑмасть. Хаклӑх законӗ вӑл—чи малтан таварлӑ производство законӗ. Вӑл капитализмччен те пулнӑ, капитализма сирпӗтсе антарсан та, сӑмахран, пирӗн ҫӗршывра, чӑн та, унӑн ӗҫӗн анлӑшӗ пысӑк мар пулин те, вӑл, таварлӑ производство пекех, халӗ те пур-ха. Паллах, хаклӑх законӗ, капитализм условийӗсенче анлӑ сарӑлнӑскер, капитализмла производствӑна аталантарас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, анчах вӑл капитализмла производствӑн ӑшчиккине тата капиталистла усламӑн никӗсӗсене палӑртса тӑмасть кӑна мар, вӑл ҫак проблемӑсене лартмасть те. Ҫавӑнпа та хаклӑх законӗ кучухнехи капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ пулма пултараймасть.

Ҫавна пула конкуренцин тата производство анархийӗн законӗ те, е тӗрлӗ ҫӗршывсенче капитализм пӗр тан мар аталаннин законӗ те капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ пулма пултараймасть.

Усламӑн вӑтам нормин законӗ кучухнехи капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ пулса тӑрать, теҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар. Хальхи капитализм, монополиллӗ капитализм, вӑтам услампа, капиталӑн органически составӗ ӳснӗ пирки чакса пырас еннелле туртӑнаканскерпе, ҫырлахма пултараймасть. Кучухнехи монополиллӗ капитализм вӑтам услам мар, чи пысӑк услам илсе тӑрасшӑн, ҫакӑ вӑл сарӑлса пыракан воспроизводствӑна хӑшпӗр таран йӗркеллӗрех туса тӑмашкӑн кирлӗ.

Капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ тесе хушӑнакан хаклӑх законне, капиталистла услам ҫуралса тата ӳссе пынин законне, пуринчен ытларах ӑнланма пулать. Ку закон чӑннипех те капитализмла производствӑн тӗп паллисене палӑртса тӑрать. Анчах хушӑнакан хаклӑх законӗ ытла та пӗтӗмӗшле закон пулса тӑрать, вӑл усламӑн чи пысӑк нормин проблемине пырса тӗкӗнмест, усламӑн чи пысӑк нормине илсе тӑни вара монополиллӗ капитализм аталанмалли условийӗ пулать. Ҫак проблемӑна татса парас тесен, хушӑнакан хаклӑх законне конкретлӑрах лартас пулать тата ӑна монополиллӗ капитализм условийӗсене май малалла аталантарас пулать, ҫав вӑхӑтрах тата ҫакна шута илмелле: монополиллӗ капитализм кирек мӗнле услам мар, шӑпах та чи пысӑк услам илсе тӑрасшӑн. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ кучухнехи капитализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ.

(Малалли 3-мӗш страницӑра).

И. СТАЛИН

ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем

(Малалли. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Кучухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисене çакăн пекрех каласа пама пулнă пулĕччĕ: çĕршыври халăхăн ытларахăшне эксплуатацилесе, юхăнтарса тата чухăнлатса, ытти çĕршывсенчи, уйрăмах та кая юлнă çĕршывсенчи, халăхсене чуралантарса тата пĕрмаях çаратса, юлашкинчен, вăрçăсем кăларса тата халăх хуçалăхне вăрçă валли ĕçлеттерсе,—çаксемпе пысăкран та пысăк уславсем илес ĕçре усă курса, капиталистла чи пысăк услам илмелле тăвасси кучухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕ пулать.

Кучухнехи условисенче капитализм аталанăвĕшĕн вăтам услам çапах та йăлтах çителĕклĕ тесе шутлама юрана пулĕччĕ, теççĕ. Ку тĕрĕс мар. Вăтам услам вăл тупăшлăхăн чи пĕчĕк виçи пулать, услам çак виçерен сахал пулсан, капитализмла производство тытăнса тăма пултараймасть. Анчах кучухнехи монополилле капитализмăн пуçлăхĕсем, колонисем тытса илсе, халăхсене чуралантарса тата вăрçăсем пуçарса, хăйсене валли мĕн пурĕ те вăтам услам çеç илме тăрăшаççĕ тесе шутлани кулăшла пулнă пулĕччĕ. Çук, вăтам услам мар, вăтам усламран, чăннипе илсен, кăшт çеç иртекен ытлашши услам та мар, шăпах та чи пысăк услам монополилле капитализма малалла илсе пыракан вăй пулса тăрать. Шăпах ĕнтĕ чи пысăк усламсем илме тăрăшни монополилле капитализма хăрушă утăмсем тума—колонисене тата кая юлнă ытти çĕршывсене чуралантарма, вĕсене пĕрмаях çаратма, пăханса тăман чылай çĕршывсене пăхăнса тăракан çĕршывсем туса хума, кучухнехи капитализмăн пуçлăхĕсемшĕн чи пысăк усламсем илмелли питех те кирлĕ «бизнес» пулса тăракан çĕнĕ вăрçăсем организацилеме, юлашкинчен, тĕнчере экономика тĕлĕшпе пуçпулса тăрас тесе тăрăшма тĕртет.

Капитализмăн экономикăлла тĕп законĕн пĕлтерĕшĕ, сăмах майăн каласан, çакăнта пулса тăрать: çак тĕп закон, производствăн капитализмла меслечĕн аталанăвĕнчи чи паллă явленисене—унăн çĕкленĕвĕсемпе кризисĕсене, унăн çĕнтерĕвĕсемпе паранăвĕсене, унăн тивĕçлĕхĕсемпе çитменлĕхĕсене,—унăн хирĕçуллĕ аталанăвĕн пĕтĕм процесне,—палăртса парса, çав явленисене ăнланса илме тата ăнлантарса пама май парать.

Акă «тĕлĕнтерекен» нумай тĕслĕхсенчен пĕри.

Капитализм историйĕпе практикинчи фактсем, капитализм вăхăтĕнче техника питех те вăйлă аталаннине кăтартса паракан фактсем, пуриншĕн те паллă: капитализм вăхăтĕнче капиталистсем малта тăракан техникăна аталантарса пыракансем, производство техникине аталантарас тĕлĕшпе революционерсем пулса тăраççĕ. Анчах ытти йышши фактсем те, капитализм вăхăтĕнче техника аталанăвĕ чарăнса ларнине кăтартса паракан фактсем те паллă: çакăн чухне капиталистсем çĕнĕ техника аталанăвĕ тĕлĕшпе реакционерсем пулса тăраççĕ, производствăра час-часах алă вĕççĕн ĕçлеттереççĕ.

Çак тĕлĕнмелле хирĕçĕве мĕнле ăнлантарса памалла-ха? Ана кучухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕпе, урăхла каласан, чи пысăк усламсем илме кирлĕ пулнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Çĕнĕ техника пысăкрах усламсем илме май парать пулсан, капитализм çав техникăшăн тăрать. Çĕнĕ техника пысăкрах усламсем илме текех май памасть пулсан, капитализм çĕнĕ техникăна хирĕç тăрать, алă вĕççĕн ĕçлеттерессишĕн тăрать.

Çакăн пек тăрать ĕç кучухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕ тĕлĕшпе.

Социализмăн экономикăлла тĕп закон пур-и? Çапла, пур. Çак законăн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисем мĕнре пулаççĕ-ха? Социализмăн экономикăлла тĕп законĕн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисене çакăн пекрех каласа пама пулнă пулĕччĕ: социализмла производствăна çÿлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ÿстерсе тата лайăхлатса пырса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси социализмăн экономикăлла тĕп законĕ пулать.

Çапла ĕнтĕ: чи пысăк усламсем илмелле тăвасси вырăнне,—обществăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пыни; производство аталанăвĕ чарăна-чарăна çĕкленÿрен кризис патне, кризисран çĕкленÿ патне пыни вырăнне,—производство вĕçĕмсĕр ÿссе пыни; техника аталанăвĕнче вăхăтран вăхăта пулакан чарăнусем, обществăн производительнăй вăйĕсене çĕмĕрекен чарăнусем вырăнне,—производствăна çÿлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ÿстерсе тата лайăхлатса пыни.

Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ халăх хуçалăхне план йĕркипе, пропорци йĕркипе аталантармалли закон пулса тăрать, теççĕ. Ку тĕрĕс мар. Халăх хуçалăхне мĕнле задачăшăн план йĕркипе аталантарни паллă мар пулсан, е вăл задача уçăмлă мар пулсан, халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантарни, çапла вара çав закона хăшпĕр таран тĕрĕс палăртса халăх хуçалăхне планлани те хăйсем тĕллĕн ним те пама пултараймаççĕ. Халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли закон умра задача пур пулсан çеç, çав задачăна пурнăçа кĕртессишĕн халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантараççĕ пулсан çеç тивĕçлĕ усă пама пултарать. Çак задачăна халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли закон хăй пама пултараймасть. Халăх хуçалăхне планлани пушшех те çав задачăна пама пултараймасть. Çак задача социализмăн экономикăлла тĕп законĕнче, унăн эпир малтарахра çырса кăтартнă хушăвĕсенче палăрса тăрать. Çавăнпа та халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли законăн вăйĕсем социализмăн экономикăлла тĕп законĕ çинче тытăнса тăраççĕ пулсан çеç пĕтĕмĕшпех ирĕклĕ пулма пултараççĕ.

Халăх хуçалăхне планлассине илес пулсан, вăл вара икĕ условие пурнăçа кĕртсе пырсан çеç лайăх результатсем пама пултарать: а) вăл халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли закон хушнисене тĕрĕс палăртать пулсан; б) вăл социализмăн экономикăлла тĕп законĕ хушнисемпе пур тĕлĕшпе те килĕшÿллĕ пулса пырать пулсан.

8. Ытти ыйтусем.

1) Феодализм вăхăтĕнче экономикăлла мар майпа ирĕксĕрлени çинчен тăракан ыйту.

Паллах, помещик-крепостниксен экономикăлла власне тĕреклетес ĕçре экономикăлла мар майпа ирĕксĕрлени тивĕçлĕ вырăн йышăннă, анчах та вăл феодализм никĕсĕ пулман, феодализм никĕсĕ—çĕр феодалсен харпăрлăхĕнче тăни пулнă.

2) Колхозник килĕн хăйĕн харпăрлăхĕ çинчен тăракан ыйту.

Учебник проектĕнче «кашни колхозник килĕ харпăр хăй усă курма ĕне, вак выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк тытать» тесе калани тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Чăннипе илсен, паллă ĕнтĕ, ĕнепе, вак выльăх-чĕрлĕхпе, кайăк-кĕшĕкпе тата уттипе те колхозник килĕ харпăр хăй усă курать çеç мар, вĕсем колхозник килĕн хăйĕн харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ. «Харпăр хăй усă курать» тенине Ялхуçалăх артелĕн примерлă Уставĕнчен илнĕ пулмалла. Анчах Ялхуçалăх артелĕн примерлă Уставĕнче йăнăш тунă. СССР Конституцийĕнче, тĕплĕнрех çырса хатĕрленĕскерĕнче, урăхла каланă. Унта акă мĕн каланă:

«Кашни колхозник килĕ... хăйĕн харпăрлăхĕнче пасмари хушма хуçалăх, пурăнмалли çурт, продукт паракан выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк тата ялхуçалăхĕн вак-тĕвек хатĕрĕсене тытса тăрать».

Ку, паллах, тĕрĕс.

Кунсăр пуçне тата çакна тĕплĕрех калама кирлĕ пулĕччĕ: кашни колхозник хăйĕн харпăрлăхĕ шутĕнче, вырăнти условисене кура, пĕр ĕнерен пуçласа çакăн чухлĕ ĕне, çакăн чухлĕ сурăх, качака, сысна (кусене те, вырăнти условисене кура, çакăнтан пуçласа çак тарана çити) тытать тата килти кайăк-кĕшĕк (кăвакалсем, хурсем, чăхсем, кăрккасем) мĕн чухлĕ усрама пултарнă таранах тытать.

Кун пек тĕплĕ кăтартса панисем пирĕн чикĕ леш енчи çĕршывсенчи юлташсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ, пирĕн çĕршыври ялхуçалăхне коллективизациленĕ хыççăн, чăннипе илсен, колхозник килĕн хăйĕн харпăрлăхĕ шутĕнче мĕн-мĕн юлнине вĕсем тĕп-тĕрĕс пĕлесшĕн.

3) Хресченсем помещиксене çĕр тара илнĕшĕн тÿленин хаклăхĕ çинчен, çавăн пекех тата вĕсен çĕр сутăн илнипе тухнă тăкаксен хаклăхĕ çинчен тăракан ыйту.

Учебник проектĕнче çакăн пек каланă: çĕре национализациленине пула «хресченсем çĕр тара илнĕшĕн помещиксене çулсерен 500 миллион тенке çити укça тÿлесе тăрассинчен хăтăлчĕç», тенĕ («ылтăн укçапа» темелле). Ку цифрăна тĕрĕсрех шутласа тухмалла, мĕншĕн тесен вăл цифра çĕр тара илнĕшĕн пĕтĕм Российăра мар, Российăри кĕпĕрнесен ытларахăшĕнче тÿленĕ укçана çеç шута илет пек туйăнать мана. Кунта çакна та асра тытас пулать: Российăн нумай окраинисенче çĕр тара илнĕшĕн укça вырăнне тĕрлĕ япаласем илнĕ, çакна учебник проекчĕн авторĕсем шута илмен пулмалла. Кунсăр пуçне, тата çакна та асра тытмалла: çĕре национализациленине пула хресченсем çĕр тара илнĕшĕн укça тÿлессинчен кăна мар, çĕр сутăн илнипе çулсерен тухакан тăкаксенчен те хăтăлчĕç. Учебник проектĕнче çакна шута илиĕ-и? Шутă илмен пек туйăнать мана, ăна шута илни кирлехчĕ.

4) Монополисем государство аппарачĕпе пĕрлешсе кайни çинчен тăракан ыйту.

«Пĕрлешсе кайни» тесе калани вырăнлă мар. Ун пек калани монополисемпе государство пĕр-пĕрин патне сывхарнине çиелтен çеç сăнласа кăтартса парать, вĕсем пĕр-пĕринпе сывхарнин экономикăлла тупсăмне уçса памасть. Ĕç акă мĕнре: вĕсем пĕр-пĕринпе çывхарнă чухне пĕрлешсе каяççĕ кăна мар, государство аппарачĕ монополисене пăхăнса тăма тытăнать. Çавăнпа та «пĕрлешсе кайни» текен сăмахсене кăларса пăрахмалла та вĕсем вырăнне «государство аппарачĕ монополисене пăхăнса тăни» тесе каламалла.

5) ССР Союзĕнче машинăсемпе усă курни çинчен тăракан ыйту.

Учебник проектĕнче çапла каланă: «ССР Союзĕнче машинăсем обществăшăн ĕçлеве перекетлеççĕ пулсан, вĕсемпе пур чухне те усă кураççĕ», тенĕ. Кунта капла мар, пачах урăхла каламалла пулнă. Пĕррремĕшĕнчен, ССР Союзĕнче машинăсем яланах обществăшăн ĕçлеве перекетлеççĕ, çавăнпа та ССР Союзĕнчи условисенче машинăсем ĕçлеве перекетлеменнине кăтартакан тĕслĕхсене эпир пĕлместпĕр. Иккĕмĕшĕнчен, машинăсем ĕçлеве перекетлеççĕ кăна мар, çав вăхăтрах вĕсем работниксен ĕçлевне çăмăллатаççĕ те, çавна пула пирĕн условисенче, капитализм условийĕсенчи пек мар, рабочисем ĕçре машинăсемпе пысăк хавасланăхпа усă кураççĕ.

Çавăнпа та акă мĕнле каламалла пулнă: нимĕнле çĕршывра та машинăсемпе ССР Союзĕнчи пек пысăк хаваслăхпа усă курмаççĕ, мĕншĕн тесен машинăсем обществăшăн ĕçлеве перекетлеççĕ тата рабочисен ĕçлевне çăмăллатаççĕ, тата, ССР Союзĕнче ĕçсĕрлĕх çук пирки, рабочисем халăх хуçалăхĕнче машинăсемпе пысăк хаваслăхпа усă кураççĕ.

6) Капитализмла çĕршывсенчи рабочи класăн материальнăй пурнăçĕ çинчен тăракан ыйту.

Рабочи класăн материальнăй пурнăçĕ çинчен каланă чухне яланах производствăра ĕçлекен рабочисем çинчен калаççĕ, ĕçсĕр тăрса юлнă рабочисен резерври çарĕ тенĕскерĕн материальнăй пурнăçне шута илмеççĕ. Рабочи класăн материальнăй пурнăçĕ çинчен тăракан ыйту çине çавăн пек пăхни тĕрĕс-и? Тĕрĕс мар тесе шутлатăп эпĕ. Ĕçсĕр тăрса юлнисен резерври çарĕ пур пулсан, унăн сыннисем хăйсен ĕç вăйне сутмасăр пурăнаймаççĕ пулсан, ĕçсĕр тăрса юлнă рабочисем вара рабочи класс йышне кĕмесĕр тăма пултараймаççĕ; вĕсем рабочи класс йышне кĕреççĕ пулсан, вара вĕсен чухăн пурнăçĕ производствăра ĕçлекен рабочисен материальнăй пурнăçне начарлатмасăр тăма пултараймасть. Çавăнпа та капитализмла çĕршывсенчи рабочи класăн материальнăй пурнăçĕ çинчен каланă чухне ĕçсĕр тăрса юлнă рабочисен резерври çарĕн пурнăçне те шута илме кирлĕ тесе шутлатăп эпĕ.

7) Наци тупăшĕ çинчен тăракан ыйту.

Эпĕ учебник проектне наци тупăшĕ çинчен калакан çĕнĕ сыпăк кĕртме кирлех тесе шутлатăп.

8) Учебникăн Ленинпа Сталин пирки, вĕсем социализмăн политикăлла экономине туса хатĕрлекенсем пулса тăни пирки ятарласа çырнă сыпăкĕ çинчен тăракан ыйту.

«Марксизм социализм çинчен вĕрентни. В. И. Ленинпа И. В. Сталин социализмăн политикăлла экономине туса хатĕрлени» ятлă сыпăка учебникран кăларса пăрахмалла тесе шутлатăп эпĕ. Учебникра ун пек сыпăк пачах та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл çĕннине нимех те памасть, учебникăн малти сыпăкĕсенче тĕплĕн çырса панă шухăшсене çиелтен çеç каласа парать.

Ытти ыйтусене илес пулсан, Островитянов, Леонтьев, Шепилов, Гатовский тата ытти юлташсем панă «сĕнÿсем» пирки манăн нимĕнле асăрхаттарусем те çук.

9. Политикăлла экономин марксистла учебникĕн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшĕ.

Пирĕн юлташсем политикăлла экономин марксистла учебникĕн пĕтĕм пĕлтерĕшне шута илмеççĕ тесе шутлатăп эпĕ. Учебник хамăрăн совет çамрăкĕсемшĕн кăна мар кирлĕ. Вăл пĕтĕм çĕршывсенчи коммунистсемшĕн тата коммунистсене кăмăллакан çынсемшĕн уйрăмах кирлĕ. Пирĕн чикĕ леш енчи юлташсем эпир капитализм тыткăнĕнчен мĕнле хăтăлса тухнине, эпир çĕршыв экономикине социализм майлă мĕнле урăхлатса çĕнетнине, эпир хресченсемпе мĕнле майпа туслăх туса çирĕплетнине, хамăрăн нумаях пулмасть-ха чухăн та вăйсăр пулнă çĕршыва эпир мĕнле майпа пуян та хăватлă çĕршыв туса хунине пĕлесшĕн, çав юлташсем колхозсем мĕнле хуçалăхсем пулнине, мĕншĕн эпир, производство хатĕрĕсене пĕрлештернĕ пулин те, таварлă производствăна, укçана, суту-илĕве пĕтерменнине тата ыттине те пĕлесшĕн. Çаксене тата ытти нумай ыйтусене вĕсем ахаль çеç пĕлес тесе мар, пирĕнтен вĕренес тата хăйсен çĕршывĕнче пирĕн опытпа усă курас тесе пĕлесшĕн. Çавăнпа та политикăлла экономин марксистла паха учебникне çырса кăларни хамăр çĕршыври политика тĕлĕшпе кăна мар, тата пĕтĕм тĕнчипе те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, пире лайăх учебник кирлĕ, вăл хамăр çĕршывра кăна мар, чикĕ леш енче те революциллĕ çамрăксемшĕн алран кайми кĕнеке пулса тăмалла. Вăл учебник ытлашши пысăк пулмалла мар, мĕншĕн тесен ытлашши пысăк учебник алран кайми кĕнеке пулса тăма пултараймасть, ăна вĕренсе ăса илме йывăр пулнă пулĕччĕ. Анчах çав учебникра пирĕн çĕршыв экономики тĕлĕшпе те, çавăн пекех капитализм экономикипе колонилле система тĕлĕшпе те тĕп ыйтусене пĕтĕмпех çутатса памалла.

Хăшпĕр юлташсем дискусси вăхăтĕнче учебника темиçе çĕнĕ сыпăк кĕртме сĕнчĕç: историксем—истори тĕлĕшпе, политиксем—политика тĕлĕшпе, философсем—философи тĕлĕшпе, экономистсем—экономика тĕлĕшпе. Анчах çакăн пек тусан, учебник ытла та пысăкланса кайнă пулĕччĕ. Паллах, ун пек тума юрамасть. Политикăлла экономи проблемисене çутатса панă чухне учебник историлле методпа усă курĕ, анчах та çакă вăл пирĕн политикăлла экономи учебникне экономикăлла хутшăнусен историйĕ туса хумаллине пĕлтермест.

Пире 500, чи нумай 600 страницăллă учебник кирлĕ,—унтан ытла мар. Çакă вăл марксистла политикăлла экономие вĕренмелли алран кайми кĕнеке пулĕ,—мĕнпур çĕршывсенчи çамрăк коммунистсемшĕн паха парне пулĕ.

Ку çеç те мар, чикĕ леш енчи çĕршывсенче компартисен нумайăшĕн марксистла аталану шайĕ çителĕклĕ пулман пирки çавнашкал учебник çав çĕршывсенчи çамрăк мар кадровăй коммунистсене те пысăк усă панă пулĕччĕ.

10. Политикăлла экономи учебникĕн проектне юсаса лайăхлатмалли майсем.

Хăшпĕр юлташсем дискусси вăхăтĕнче учебник проектне ытла хытă «аркатса тăкрĕç», унăн авторĕсене йăнăшсемшĕн тата асăрхаман çитменлĕхсемшĕн ятларĕç, проект ăнăçлă пулман, терĕç. Ку тĕрĕс мар. Паллах, учебникра йăнăшсем тата асăрхаман çитменлĕхсем пур,—вĕсем пысăк ĕçре яланах тенĕ пекех пулаççĕ. Анчах мĕнле пулсан та, дискуссие хутшăннă юлташсенчен нумай ытларахăшĕ çапах та: учебник проекчĕ пулас учебникăн никĕсĕ пулма пултарать тесе йышăнчĕ, унта хăшпĕр тÿрлетÿсемпе хушусем çеç кĕртмелле, терĕ. Чăнах та, учебник проектне политикăлла экономин халĕ усă куракан учебникĕсемпе танлаштарса пăхсанах, çакăн пек вывод тума пулать: учебник проекчĕ халĕ усă куракан учебниксенчен нумай малта тăрать. Çакăнта ĕнтĕ учебник авторĕсен тава тивĕçлĕ пысăк ĕçĕ.

Эпĕ çапла шухăшлатăп: учебник проектне лайăхлатма йышлă мар комисси тумалла, унта учебник авторĕсене кăна мар тата дискуссие хутшăннă юлташсен ытларахăшĕ майлă тăракансене кăна та мар, çав ытларахăшне хирĕç пыракансене те, учебник проектне хытă тиркекен критиксене те кĕртмелле.

Комиссие учебникри цифрăсене тĕрĕслеме тата проекта çĕнĕ статистикăлла материалсем хушма опытлă статистика кĕртсен, çавăн пекех тата формулировкăсен тĕрĕслĕхне пăхса тухма опытлă юриста кĕртсен аван пулнă пулĕччĕ.

Комисси членĕсене вăхăтлăха ытти пур ĕçсенчен те хăтармалла, вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне учебник çырас ĕçе паччăр тесе, вĕсене çителĕклех ĕç укçи парса тăмалла.

Кунсăр пуçне, учебника вĕçне çитиех редакцилеме редакци комиссийĕ, калăпăр, виçĕ çынтан уйăрса лартмалла. Ку вăл учебникăн стильне пĕр пек тумашкăн та кирлĕ, учебник проекчĕн, шел пулин те, пĕр пек стиль çук-ха.

Хатĕр учебника Центральнăй Комитета тăратмалли срок — 1 çул.

И. СТАЛИН.

1952 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

Александр Ильич Ноткин юлташа панă ответ

Ноткин юлташ!

Эпĕ ответ пама васкамарăм, мĕншĕн тесен Эсир лартнă ыйтусене васкавлă ыйтусем тесе шутламастăп. Кунсăр пуçне ытти васкавлă ыйтусем пулчĕç, вĕсем, паллах ĕнтĕ, Сирĕн çыру çине ответ пама чăрмантарчĕç.

Уйрăм пунктсем тăрăх ответ паратăп.

ПĔРРЕМĔШ ПУНКТ ТĂРĂХ.

«Асăрхаттарусенче» çакăн пек паллă положени пур: общество наука законĕсем умĕнче вăйсăр мар, çынсем, экономикăлла законсене тĕпчесе пĕлсе, вĕсемпе общество интересĕсемшĕн усă курма пултараççĕ. Эсир вара çав положени обществăн ытти формацийĕсенче пулма пултараймасть, вăл социализмпа коммунизм вăхăтĕнче çеç вăйра пулма пултарать, сăмахран, капитализм вăхăтĕнче экономикăлла процессен характерĕ стихийăллă пулни обществăна экономикăлла законсемпе общество интересĕсемшĕн усă курма май памасть, тетĕр.

Çакă вăл тĕрĕс мар. Буржуалла революци саманинче, сăмахран, Францире буржуази производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе обязательнă килĕшсе тăмалла текен паллă законпа феодализма хирĕç усă курнă, феодализмла производствăлла хутшăнусене пĕтерсе хунă, çĕнĕ, буржуалла производствăлла хутшăнусем туса хунă тата çав производствăлла хутшăнусене феодализмла строй ăшĕнче ÿссе çитĕннĕ производительнăй вăйсемпе килĕшсе тăмалла тунă. Буржуази çакна хăй уйрăмах пултаруллă пулнă пирки мар, çак ăна питĕ кирлĕ пулнă пирки тунă. Феодалсем, хăйсем тăмсай пулнă пирки мар, ку закона пурнăçа кĕртме чарни хăйсене питĕ кирлĕ пулнă пирки çавна хирĕç тăнă.

Пирĕн çĕршыври социализмла революци çинчен те çавнах каламалла. Рабочи класс производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе обязательнă килĕшсе тăмалла текен законпа усă курчĕ, буржуалла производствăлла хутшăнусене пĕтерсе хучĕ, çĕнĕ, социализмла производствăлла хутшăнусем туса хучĕ тата çав производствăлла хутшăнусене производительнăй вăйсен характерĕпе килĕшсе тăмалла турĕ. Рабочи класс çакна хăй уйрăмах пултаруллă пулнă пирки мар, çак ĕç ăна питĕ кирлĕ пулнă пирки тума пултарчĕ. Буржуази, буржуалла революци пуçланнă вăхăтра малта пыракан вăй пулнă çĕртен контрреволюциллĕ вăй пулса тăма ĕлкĕрнĕскер, çав закона пурнăçа кĕртессине хирĕç пур майсемпе те тăнă,—вăл хăй организациленмен пирки мар тата экономикăлла процессен стихийăллă характерĕ ăна хирĕç тăма тĕртнĕ пирки те мар, пуринчен ытла çав закона пурнăçа кĕртессине хирĕç пыни ăна питĕ кирлĕ пулнă пирки хирĕç тăнă.

Çапла ĕнтĕ:

1. Экономикăлла процессемпе, экономикăлла законсемпе общество интересĕсемшĕн усă курасси социализмпа коммунизм вăхăтĕнче кăна мар, ытти формацисем вăхăтĕнче те хăшпĕр таран пулса пырать;

2. Экономикăлла законсемпе усă курасси класлă обществăра яланах тата пур çĕрте те класс интересĕсем хушнă пек пулса пырать. Çавăнпа пĕрлех экономикăлла законсемпе усă курас ĕçе яланах тата пур çĕрте те малта тăракан класс туса пырать, пĕтсе пыракан классем вара çав ĕçе хирĕç тăраççĕ.

Ку ĕçре, пĕр енчен, пролетариат тата, тепĕр енчен, истори тăршшĕнче хăçан та пулин производствăлла хутшăнусенче переворотсем тунă ытти классем хушшинчи уйрăмлăх çакăнта пулать: пролетариатăн класлă интересĕсем обществăн нумай пысăкрах пайĕн интересĕсемпе пĕрлешсе каяççĕ, мĕншĕн тесен пролетариат революцийĕ эксплуатацин пĕр-пĕр формине пĕтернине кăна мар, кирек мĕнле эксплуатацие те пĕтернине пĕлтерет, çав вăхăтрах ытти классен революцийĕсем вара, эксплуатацин пĕр-пĕр формине çеç пĕтерсе, çав классен хĕсĕк интересĕсемпех, обществăн пысăкрах пайĕн интересĕсене хирĕç пыракан интерессемпех чарăнса тăнă.

«Асăрхаттарусенче» экономикăлла законсемпе общество интересĕсемшĕн усă курас ĕç класс интересĕсем хушнă пек пулса пыни çинчен каланă. Унта çапла каланă: «Естествознанире çĕнĕ закона тĕпчесе тупса унпа усă курасси хăшпĕр таран ăпкăн пулса пырать пулсан, экономикăра вара çĕнĕ закона тĕпчесе тупса унпа усă курасси обществăн пĕтсе пыракан вăйĕсен интересĕсене пырса тивет, çавăнпа та çав вăйсем ăна хирĕç питех те хытă тăраççĕ». Анчах та Эсир çакна асăрхаман.

ИККĔМĔШ ПУНКТ ТĂРĂХ.

Эсир çапла калатăр: производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе пĕтĕмпех килĕшсе тăрассине социализмпа коммунизм вăхăтĕнче çеç туса çитерме пулать, ытти формацисем вăхăтĕнче вара пĕтĕмпех мар килĕшсе тăрассине çеç пурнăçа кĕртме пулать, тетĕр.

Çакă вăл тĕрĕс мар. Буржуалла революци хыççăнхи саманара, буржуази феодализмла производствăлла хутшăнусене аркатса тăксан тата буржуалла производствăлла хутшăнусем туса хурсан, буржуалла производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе пĕтĕмпех килĕшсе тăнă тапхăрсем, чăннипех пулнă. Ун пек пулман пулсан, капитализм буржуалла революци хыççăн аталаннă пек хăвăрт аталанма пултарайман пулĕччĕ.

Малалла, «пĕтĕмпех килĕшсе тăни» тенĕ сăмахсене шухăша тăтăклăнах каласа паракан сăмахсем тесе ăнланмалла мар. Çав сăмахсене социализм вăхăтĕнче производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен ÿсĕмĕнчен юлса пыни нимĕн чухлĕ те пулмасть тесе ăнланмалла мар. Производительнăй вăйсем производствăн ытларах аталанса пыракан тата революциллĕ вăйĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем социализм вăхăтĕнче те производствăлла хутшăнусенчен чăннипех те малта пыраççĕ. Производствăлла хутшăнусем кăшт вăхăт иртсен çеç производительнăй вăйсен характерне кура урăхланса çĕнелеççĕ.

Апла пулсан, «пĕтĕмпех килĕшсе тăни» тенĕ сăмахсене мĕнле ăнланмалла-ха? Вĕсене çапла ăнланмалла: ĕç социализм вăхăтĕнче производствăлла хутшăнусемпе производительнăй вăйсем хушшинче конфликт пуласси патне çитмест, кая юлса пыракан производствăлла хутшăнусене общество вăхăтра производительнăй вăйсен характерĕпе килĕшсе тăракан туса хума пултарать. Социализмла общество çакна тума пултарать, мĕншĕн тесен унăн хăйĕн составĕнче пĕтсе пыракан, хирĕç тăрассине организациленме пултаракан классем çук. Паллах, социализм вăхăтĕнче те юлса пыракан хускалман вăйсем, производствăлла хутшăнусене улăштарни кирлине ăнланман вăйсем, пулаççĕ, анчах вĕсене, паллă ĕнтĕ, ĕçе конфликт патне çитермесĕрех çĕнтерме пулать.

(Малалли çитес номерте пулать).

Паха апат-çимĕç ытларах туса кăларассишĕн

Çак кунсенче апат-çимĕç промышленность работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу «Апат-çимĕç промышленноçĕ 1952 çулта мĕнле ĕçлени тата 1953 çулхи плана тултарас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен» Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность министрĕн П. Калинкина юлташăн докладне итлесе сÿтсе яврĕ.

Докладчик тата прение тухса калакансем çакна палăртрĕç: 1952 çулта республикăри апат-çимĕç промышленноçĕ планран иртерсе 2,5 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли задание ăнăçлă пурнăçланă. Шупашкарти макарон фабрики, сăра завочĕ тата ытти хăшпĕр предприятисем продукци пахалăхне лайăхлатнă. Анчах апат-çимĕç промышленноçĕнче усă курман резервсем тата çитменлĕхсем сахал мар.

Пĕлтĕр Апат-çимĕç промышленность министерстви ĕçсыннисене 561 тонна крахмал, 130 тонна патока, 115 тонна кондитерски изделисем парса çитереймен. Крахмалпа патока завочĕсем вырăнти чĕртавартан продукци туса кăлараççĕ, вĕсен оборудовани çителĕклĕ. Апла пулин те крахмал тресчĕ виçĕ çул хушшинче çулталăкри плана тултарман. Шупашкарти кондитерски фабрика, Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ çулталăкри плана пĕтĕмпе те тултарман. Чылай предприятисем япăх продукци туса кăлараççĕ. Министерствăпа предприяти руководителĕсем йывăр ĕçе механизацилеме кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Хуçасăрлăха хирĕç тимлĕн кĕрешмен; чĕртаварпа материалсене перекетлеме тăрăшман пирки апат-çимĕç промышленноçĕ планпа палăртнинчен пĕр миллион тенкĕ ытла тупăш сахалтарах тунă.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1952 çулта Канаш хулинчи апат-çимĕç комбинатне çĕнетсе пысăклатмалла, Çĕмĕрлери апат-çимĕç комбинатĕнче тутлă шывсем тăвакан цех туса лартмалла пулнă. Çак ĕçе туса пĕтермен. Министерство ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—кадрсене суйласа илес, вĕсене воспитани парас, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени Министерство тата министр П. Калинкина юлташ хăшпĕр чухне юрăхсăр, государство дисциплинине пăсакан, киревсĕр ĕçсем тăвакан руководительсене хÿтĕлеççĕ. Чылай предприятисенче культурăллă-массăллă ĕçе, социализмла ăмăртăва йĕркелемен; критикăпа самокритикăна сарман.

Кăçал апат-çимĕç промышленноçĕ умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ: иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 15 миллион тенкĕлĕх продукци ытларах туса кăлармалла, продукци пахалăхне лайăхлатмалла, ассортиментне нумайлатмалла, ĕç тухăçлăхне ÿстермелле, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелле. Пысăклатнă плана ăнăçлăн тултарас тесен, предприятисен пĕр тикĕс ĕçлемелле, чĕртаварпа материалсене перекетлемелле, оборудование татти-сыпписĕр ĕçлеттермелле. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта чылай предприятисем хăйсен ĕçне вăйсăрлатнă. Çакă вăл хуçалăх руководителĕсем Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панисенчен тивĕçлĕ вывод туманнине пĕлтерет.

Прение тухса калакансем апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисене, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин ăслă политикине ырлани, партипе правительство чĕнсе калани çине производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе ответлени çинчен каласа пачĕç.

Доклад тăрăх 20 çын тухса каларĕ. Шупашкарти кондитерски фабрика директорĕ Егоров юлташ докладчик Калинкина юлташ хăйĕн тата министерствăра ĕçлекен работниксен çитменлĕхĕсем çинчен каласа паманнине, министерство предприятисене оперативно ертсе пыманнине палăртать.

Йĕпреçри патока завочĕн директорĕ Казаков юлташ крахмал трест управляющине Ефимов юлташа рационализаторла сĕнÿсене пурнăçлама пулăшманшăн критиклерĕ.

Мордва республикинчи апат-çимĕç промышленноçĕ иртнĕ çулхи плана мĕнле тултарни тата кăçалхи плана тултарас тĕлĕшпе предприятисенче мĕнле ĕçсем туса иртерни çинчен Гомзякова юлташ каласа пачĕ.

Улатăрти апат-çимĕç комбинатĕнчи стахановка Слатвицкая юлташ министерство малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Канашлура КПСС обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ П. Чичикин юлташпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ Д. Полукаров юлташ тухса каларĕç.

Канашлу Мордва республикинчи апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсем социализмла ăмăртăва чĕннине ырларĕ, 1953 çулхи плана срокчен, декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма, государство заданине кашни предприяти тата çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх пурнăçлама, планран иртерсе 1,6 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларма, продукци пахалăхне лайăхлатма. ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетме, планран иртерсе 300 пин тенкĕлĕх тупăш тума социализмла обязательство йышăнчĕ.

Юлашки почтăран

Пĕли-пĕлми çырсан...

ЭЛĔК. Мартăн 15-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен районти «Колхоз хаçачĕ» хаçатăн куçса çÿрекен парнине илмелли ăмăртăвĕ пулчĕ. Çакăн çинчен «Колхоз хаçачĕ» мартăн 22-мĕшĕнче: «Д. Васильев, В. Лукин (Вырăс Сурăм вăтам шкулĕ) вĕренекенсем виçĕ километрлă дистанцие 15 минут та 55 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăна йышăнчĕç»,—тесе çырса пĕлтерчĕ.

Фактсем пачах урăхла. Виçĕ километра хĕрачасенчен Вырăс Сурăм шкулĕнче вĕренекен Д. Васильева 15 минут та 55 секундра, арçын ачасенчен—Тукташри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен В. Лукин 14 минут та 5 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Фактсене пăтраштарни, вĕренекенсен хушамачĕсене пăсса çырни, пĕр дистанцине тухнăшăнах икĕ арçын ачана пĕр вырăн пани редакци работникĕсем ăмăртура хăйсем пулманнинчен, редакцире çырусене çиелтен пăхса, тирпейсĕр редакцилениинчен килнĕ.

А. КУСТИКОВ,
ВЛКСМ Элĕк райкомĕн секретарĕ.

А. Я. Вышинский Нью-Йорка пырса çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн заместителĕ, Совет Союзĕн ООН-ри яланхи представителĕ А. Я. Вышинский «Куин Мэри» пăрахутпа Нью-Йорка пырса çитнĕ.

Итали халăхĕ Пальмиро Тольятти 60 çул тултарнине палăртать

РИМ, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Италири Коммунистсен партийĕ тата демократиллĕ организацисем паян Пальмиро Тольятти 60 çул тултарнине палăртаççĕ. «Унита» хаçат курăнакан вырăна Италири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Центральнăй контроль комиссийĕ янă саламлă послание пичетлесе кăларнă. Хаçат çавăн пекех КПСС Центральнăй Комитечĕн саламлă телеграммине, Италири демократиллĕ нумай организацисен телеграммисене, уйрăммăн илсен Италири социалистсен партийĕн, Пĕтĕм Италири ĕçлев конфедерацийĕн телеграммисене тата ыттисене те пичетлесе кăларнă.

Польшăра Америка шпионĕсене суд туни

ВАРШАВА, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Щецин хулинчи çар судĕнче Америка разведкин агенчĕсене суд тума тытăннă. Айăпланакансем: Владислав Борский тата Сергей Пирог (вăлах Петкевич), çавăн пекех тата вĕсем Польшăра шпион пулма явăçтарнă çынсем Юзеф Пухальский, Ян Пашкевич, Вацлав Войтман тата Михал Пирог.

Айăпласа çырнинче çапла каланă: Польша территорийĕнче ĕçлесе тăнă çак шпионла бандăн тĕп организаторĕ—санаци полицийĕн (Пилсудский вăхăтĕнче туса хунă полици.—**Ред.**) сотрудникĕн ывăлĕ Владислав Борский пулнă.

Айăпланакансем пурте хăйсен айăпне йышăннă.

Бирма правительстви ООН-а панă жалоба

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Бирма гоминдан бандисем Бирмăна хирĕç агрессиллĕ ĕçсем тунă пирки Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине жалоба панă.

Бирма ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сао Кун Кио Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн генеральнăй секретарĕ патне телеграмма янă. Унта гоминдановецсем Бирмăна хирĕç агрессиллĕ ĕçсем тунă пирки Бирма союзĕн жалобине ООН Генеральнăй Ассамблейин хальхи сессийĕн кун йĕркине кĕртме ыйтнă. Телеграммăра: çак жалоба питĕ кирлĕ тата ăна тăхтаса тăмасăр пăхса тухмалла, тесе каланă.

Бирма пĕлтернĕ тăрăх, унăн территорийĕ çинче 12 пине яхăн Чан Кай-ши салтакĕсем тăраççĕ. Гоминдан çарĕсем тĕнчери право тăрăх хĕçпăшалсăрланма хушнă приказа пăхăнма килĕшменни те, çавăн пекех тата гоминдан çарĕсем Бирма çарĕсене хирĕç вăрçă вăрçни тата граждан халăхне çаратни те Чан Кай-ши бандисем агрессиллĕ ĕç тунине çирĕплетсе парать, тенĕ. «Паллах,—тенĕ Бирма правительствин жалобинче,—гоминдан çарĕсен Бирмăри çак законсăр ĕçĕсене «Формоза» правительстви ертсе пырать».

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăллă комитетра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 25-мĕшĕнче Политикăллă комитетăн ирхи ларăвĕнче Белорус ССР, Голланди, Греци, Канада, Турци, Коста-Рика, Парагвай, Югослави делегачĕсем тата гоминдан агенчĕ тухса каланă. Комитет Пĕрлешÿллĕ Штатсем ытти государствăсен шалти ĕçне хутшăнни çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явать.

Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ К. Киселев комитета çакăн çинчен асăрхаттарнă: США конгресĕ «пĕр-пĕрин хушшинче хăрушсăрлăх туса хурасси» çинчен калакан закон çумне хушса Кестен конгрессменăн тÿрлетĕвĕсене йышăнни ООН Уставĕпе тĕнчери право принципĕсене сĕмсĕррĕн пăсни пулать. Çак закон Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла тата шпионла-диверсилле ĕçсем тума 100 миллион доллар укçа пама палăртать.

США правительстви халăх демократи çĕршывĕсене шпионсемпе диверсантсем ярса тăни çинчен Америка хаçачĕсем уçăнах çыраççĕ. Çавăн пек, 1951 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче Ньюаркра тухса тăракан «Стар леджер» хаçатра çар обозревателĕ полковник Леонард Нэссон çапла çырнă: «Мĕн чухлĕ укçа расходланине пĕлместĕп пулсан та, эпĕ çакна питĕ лайăх пĕлетĕп тесе калама пултаратăп: США тимĕр хÿтĕлĕх хыçĕнче шпионла тата диверсилле ĕçсем туса пырать. Эпир тăвакан диверсилле ĕçсем питех те пысăк, çавăнпа та пире час-часах тытаççĕ».

Малалла Киселев Чехословакипе Совет Союзĕн представителĕсем илсе кăтартнă нумай фактсенчен пĕрне те Америка делегачĕ Лодж сирсе яма пултарайманнине палăртнă.

Юлашкинчен Киселев çапла каланă: Белорус ССР делегацийĕ Чехословаки республикин делегацийĕ тăратнă резолюци проектне пĕтĕмпех йышăнать тата унăн майлă сасăлать.

К. Киселев хыççăн тухса каланă Греци, Канада, Турци, Коста-Рика, Югослави делегачĕсем, гоминдан агенчĕ Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне хирĕç сасăласси çинчен каланă. Çакна палăртмалла: вĕсем СССР, Чехословаки, Польша тата Белорус ССР делегацийĕсем Пĕрлешÿллĕ Штатсем Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен шалти ĕçĕсене хутшăнни çинчен илсе кăтартнă фактсене сÿтсе явассинчен пăрănса юлма тăрăшнă.

Комитетăн ирхи ларăвĕ çакăнпа хупăннă.

Францире демократи деятелĕсене арестлеççĕ

ПАРИЖ, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине полици Францири демократипе профсоюз деятелĕсене çĕнĕрен арестленĕ. «Юманите» хаçатăн главнăй редакторне, Сталинла преми лауреатне, Францири паллă писателе Андрэ Стиле, Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн секретарьне Люсьен Молинона тата профсоюзсен Париж районĕнчи Пĕрлешĕвĕн секретарьне Андрэ Толлене арестленĕ. Вĕсене «государствăн тулашри хăрушсăрлăхĕ çине тапăннă» тесе айăплаççĕ. Çавăн пекех Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн генеральнăй секретарьне Бенуа Фрашона тата государство служащийĕсен федерацийĕн пĕтĕм Францири союзĕн генеральнăй секретарьне Дифриша арестлеме ордер панă. Дифриш хальхи вăхăтра Венăра. Фрашона полици пур çĕрте те шырать.

Каçхи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, полици асăннă деятельсен хваттерĕсене ухтарнă. Çавăн пекех Пĕтĕм Францири ĕçлев федерацийĕн, профсоюзсен Париж районĕнчи Пĕрлешĕвĕн, профсоюзсен Пĕтĕм тĕнчери издательствин çурчĕсенче, çавăн пекех «Всемирное профсоюзное движение» журнал редакци секретарĕн Лаказетта хваттерĕнче, металлурги промышленноçĕнче тата машинăсем тăвакан промышленноçра ĕçлекенсен профсоюзĕн Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн секретарĕн Журден хваттерĕнче, моряксемпе докерсен профсоюзĕн Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн председателĕн Боден хваттерĕнче ухтарнă. Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕпе профсоюзсен Париж районĕнчи Пĕрлешĕвĕн çурчĕсенче ухтару тунă чухне полици тĕрлĕ документсем илсе кайнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, документсене полици «тĕпчесе вĕренет». Арестленĕ Стиле, Молинона тата Толлене «Фрэн» тĕрмине хупса лартнă.

Çак арестсемпе ухтарусем пирки паян «Юманите» хаçатăн ятарласа кăларнă номерĕ тухнă. Унта Францири Коммунистсен партийĕн заявленине пичетлесе кăларнă. Заявленире çапла каланă:

«Правительство тăвакан çак тискер ĕçсем вĕсем чи малтан рабочи класа хирĕç, унăн партине—Францири коммунистсен партине тата Пĕтĕм Францири ĕçлев федерацине хирĕç—профсоюз организацине хирĕç пыраççĕ. Çак организацисем вĕсем ĕçсыннисен интересĕсене хÿтĕлеççĕ, вĕсене халăхăн пысăк масси шанса тăрать».

Правительство çакăн пек ĕçсем туса, тенĕ заявленире, миршĕн тăракансене хăратасшăн, вĕсене иккĕлентересшĕн.

Малалла заявленире çапла каланă: çак майпа правительство наци пухăвне хĕсесшĕн, ăна Францири коммунистсен партийĕн руководителĕсен—парламент депутачĕсен никам тĕкĕнменлĕх правине пĕтерсе лартма решени йышăнтарасшăн. Коммунистсен партийĕ мĕнпур французсене арестленĕ çынсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешме чĕнет.

«Юманите» хаçатăн ятарласа кăларнă номерĕнче çавăн пекех тата Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн бюровĕн заявленине пичетлесе кăларнă. Унта профсоюз организацийĕсен çурчĕсенче, закона пăсса, ухтарусем тунине хирĕç протестленĕ.

Конфедераци мĕнпур ĕçсыннисене, мĕнпур демократсемпе республиканецсене «фашизм çулне пÿлессишĕн, правительство каварне пĕтерсе лартассишĕн тата Ален Ле Леапа, Люсьен Молинона, Андрэ Толлене, çавăн пекех законсăр арестленĕ ытти патриотсене халех тĕрмерен кăлармалла тăвассишĕн тата тачăрах пĕтĕçме» чĕнет.

Демократиллĕ организацисен çурчĕсенче ухтарусем туни тата Францири демократи деятелĕсене арестлени Францири мĕнпур ĕçсынни массисене тарăхтарса янă. Профсоюзсен организацийĕсен çурчĕсенче ухтарусем пулни çинчен пĕлсенех Париж районĕнчи нумай фабрикăсемпе заводсенче, предприятисенче рабочисемпе служащисем пухусемпе митингсем иртернĕ, протест туса кĕске вăхăтлăха забастовка тунă. Парижри «Рено» автомобиль заводĕнче пулнă митинга темиçе пин çын пухăннă. Рабочисем профсоюз организацийĕсене законсăр йĕркепе хĕсĕрленине хирĕç татăклă протест пама Наци пухăвне кашни цехран делегаци суйласа яма йышăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем Чхолвоньран хĕвеланăç еннерех, Санихобан районĕнче Америкăпа Англи интервенчĕсене хирĕç оборонăра тăрса хаяррăн çапăçнă.

Зенитнăй чаçсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе укернĕ.

АМЕРИКА ЛАГЕРĔСЕНЧЕ ТЫТКĂНРИ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ÇАПЛАХ ВĔЛЕРЕÇÇĔ

ПЕКИН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернинче çапла каланă:

Мартăн 20-мĕшĕнче 3 сехет те 20 минутра Кочжедо утравĕ çинчи тыткăна илнĕ çар çыннисен лагерĕнче Америка хуралĕ тыткăнри çар çыннине вĕлернĕ. Мартăн 19-мĕшĕнче Кочжедо утравĕ çинчи лагерьсенчен пĕринче тыткăна илнĕ икĕ çар çыннине амантнă.

Çав кунах американецсем Йончходо утравĕ çинче тыткăна илнĕ 8 пин çар çынни çине газ янă. Вĕсене «бунт тума хатĕрленеççĕ», тесе айăпланă. Çав вăхăтра мисе çар çыннине вĕлерни тата амантни çинчен нимĕн те каламаççĕ. Çак утрав çинче мартăн 7-мĕшĕпе 16-мĕшĕнче те çакнашкал тискер ĕçсем туса иртернĕ.

Филиппинри ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар хăйĕн ĕçне активлатнă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Манилăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра хукбонг çарĕ (Филиппинри ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар) хăйĕн кĕрешÿ ĕçĕсене активлатма пуçланă. Çак çарăн отрячĕсем, тесе çырать корреспондент, Манила сывăхĕнчи районсем çине те тапăнаççĕ. Мартăн 22-мĕшĕнче хукбонг çарĕн отрячĕ правительство çарĕн подразделенине çĕмĕрсе тăкнă, Буэна Виста хулине чылай вăхăт хушши хăйĕн аллинче тытса тăнă.

Корреспондент малалла тата çапла çырать: хукбонг отрячĕсем Кавите тата Лагуна провинцийĕсенче (иккĕшĕ те Манила сывăхĕнче), çавăн пекех Пампанга провинцийĕнче правительство çарĕсем çине темиçе хут тапăннă.

БОНПА ПАРИЖ ДОГОВОРĔСЕНЕ БУНДЕСТАГРА РАТИФИКАЦИЛЕНĔ ХЫÇÇĂН

Аденауэрпа Риджуэй хушшинчи калаçусем

БЕРЛИН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Атлантика союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ генерал Риджуэй хăй нумаях пулмасть Хĕвеланăç Германире пулнă вăхăтра Бонн канцлерĕпе Аденауэрпа калаçнă. Калаçăва Гитлер çарĕн полковникĕсем пулнă Бойн тата Кильманзэк хутшăннă.

Риджуэй, тенĕ АДН агентствин пĕлтерĕвĕнче, Бонра тата Парижра алă пуснă çар договорĕсене бундестагра ратификациленĕ хыççăн «Европа çарĕ» валли Хĕвеланăç Германи çарне тума хатĕрленес ĕç мĕнле пынипе интересленнĕ.

Америка влаçĕсем Итали пăрахучĕсене конфискацилеççĕ

РИМ, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Аванти» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, США Италин 6 пăрахутне, «кайма чарнă» çĕршывсене, урăхла каласан, Китайна ытти халăх демократи çĕршывĕсене таварсем турттарнăшăн конфискациленĕ.

Кунта сăмах «Либерти» йышши пăрахутсем çинчен пырать. Вĕсене американецсем хăй вăхăтĕнче Итали правительствине панă пулнă. Итали правительстви вĕсене пăрахут хуçисене панă.

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ ÿсĕмсемшĕн

Çак кунсенче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ялхуçалăх ĕçĕсен 1952 çулхи итогне сÿтсе яврĕ тата ялхуçалăхне малалла аталантарса пырас тĕлĕшпе кăçалхи задачăсене палăртрĕ.

Иртнĕ çулта районти колхозсем тырпул тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе хăшпĕр ÿсĕмсем тунă. Тухăçлă тырпул ÿстерессипе «Аврора», «Свобода», Сталин ячĕпе, Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем мала тухнă. Уйрăм бригадăсем пысăк тухăçлă тырпул ÿстернĕ. «Красное Сормово» колхозри Волков юлташ бригади кашни гектар çинчен 21,1 центнер, Муравьев бригади 20,32 центнер тулă пухса илнĕ. Энгельс ячĕпе тăракан колхозри Захаров бригади кашни гектар çинчен 23-шер центнер тулă пухса кĕртнĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра иртерес, тухăçлă тырпул ÿстерес тĕлĕшпе, машина-трактор станцийĕ колхозсене нумай пулăшнă, тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 102 процент тултарнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана «Аврора», Сталин ячĕпе тăракан, «Сталинец» тата «Искра» колхозсем тултарнă. Выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат тата лайăх çуртсем хатĕрленĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри ĕне фермине ĕçлекенсем çамрăк пăрусене пурне те тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстернĕ. Вĕсем кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.517-шер литр, В. Спаскина доярка 1.664-шер литр, Н. Пугачева доярка 1.637-шер литр сĕт суса илнĕ. Çак колхозри В. Плотникова свинарка хăйне çирĕплетсе панă кашни сысна аминчен 19,8-шер çура илсе пăхса ÿстернĕ. «Сталинец» колхозри З. Юнусовăпа А. Никитина свинаркăсем 20—21,5-шер çура илнĕ, пурне те тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстернĕ.

Çак тĕслĕхсем вĕсем районти колхозсенче тырпул тухăçлăхне ÿстерме, йышлă та тупăшлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме лайăх майсем, пысăк резервсем пуррине кăтартса параççĕ. Апла пулсан та район тырпул пухса илмелли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата унтан тупăш илмелли плансене чылай тултарман. Уйрăм колхозсен руководителĕсем, сăмахран, Маленков ячĕпе, Чапаев ячĕпе, Мичурин ячĕпе, Ульянов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Герой», «Красный Октябрь» колхозсен председателĕсем государство дисциплинине çирĕп тытса ĕçлемен, тырпул акмалли, вырăнти удобренисем хатĕрлемелли плана тултарман, агротехникăна хытă пăснă. Çавна пулах асăннă колхозсем кашни гектартан пурĕ те 6—7-шер центнер кăна тырпул пухса илнĕ. Вĕсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Выльăх апачĕ, выльăхсем валли çуртйĕрсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлемен.

Сталин ячĕпе, Энгельс ячĕпе тăракан, «Свобода», «Аврора», «Красное Сормово» тата ытти малта пыракан колхозсем, Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 100—125 пăт тĕштырă пухса илме пулнă. Çав колхозсем хăлĕ çуракине хĕрÿллĕн хатĕрленеççĕ.

Çав вăхăтрах уйрăм колхозсем çуракине хатĕрленме ку тарана çитсе те тивĕçлипе тытăнман. Калинин ячĕпе, Ульянов ячĕпе тăракан колхозсенче çĕршер центнер вăрлăх çитмест. Районти чылай колхозсем вăрлăх пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ. Ку таранччен лабораторире тĕрĕсленĕ вăрлăхран 77,1 процентĕ кондициллĕ мар. Сортсăр тата акма юрăхлă вăрлăха улăштарассине организацилемен. Районти колхозсенче техникăллă культурăсен, пĕр çул тата нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕ нумай çитмест.

Çураки иртерме кирлĕ техникăна хатĕрлес енĕпе те хăвăртлăхсене чылай ÿстерни кирлĕ. МТС тракторсемпе машинăсен паркне пурĕ те 62,5 процент кăна юсанă. «Ударник», «Красный Октябрь» колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсама пачах тытăнман.

Канашлура 14 çын тухса каларĕ. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, хăйсен паха опычĕсемпе паллаштарнипе пĕрлех, ÿсĕмсем тума чăрмантаракан çитменлĕхсене пĕтерме кирлине кăтартса пачĕç. Трактор бригадисемпе уй-хир бригадисем хушшинчи ĕçлĕ туслăха ытларах çирĕплетме, ялхуçалăх специалисчĕсене колхозсене ытларах пулăшма, колхозниксен вĕренĕвне аталантарма тата малта пыракансен опытне анлăн сарса пыма сĕнчĕç.

Канашлура Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Е. Андреев юлташ тухса каларĕ. Вăл халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа пытарнă çĕрте пирĕн республика делегацийĕпе пĕрле пулнă.

— Республикăран кайнă делегаци Иосиф Виссарионович Сталин тупăкĕ умĕнче хисеплĕ хуралта тăнă чухне, — терĕ Андреев юлташ,—пирĕнтен кашниех Сталин юлташăн çутă сăнарне ĕмĕрлĕхех хăйĕн чĕринче тытса юлчĕ. Аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр хушса хăварнисене пурнăçласа пыма тупа турăмăр.

Малалла Андреев юлташ аслă çулпуçне пытарнă кун Хĕрлĕ площадьре пулса, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсем Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене итлени çинчен каларĕ.

— Вĕсен сăмахĕсем,—терĕ Андреев юлташ,—пирĕн халăх Ленинпа Сталинăн ĕçне чĕререн парăнса тăма тупа туни, пирĕн ретсене партипе Совет правительстви тавра пĕтĕçтерме, пĕрлĕхлĕ тата пĕтĕçÿллĕ, сыхă пулма, Тăван çĕршыва парăнса тăма, коммунизм патне çĕнтерÿллĕн утма чĕнни пулчĕ.

Çак кунсенче Сталин ячĕпе тăракан артель членĕсем пĕр шухăш-кăмăлпа пурнаççĕ. Вĕсем иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене пур енĕпе те ăнăçлă вĕçленĕ. Кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă пухса илме, техникăллă культурăсен тухăçлăхне чылай ÿстерме палăртнă. Кашни ĕнерен 1.600 литртан кая мар сĕт суса илме, кашни сысна амине пуçне 18 çураран кая мар пăхса ÿстерме, çĕр ĕнерен 100 пăруран кая мар, çĕр сурăхран 110 путекрен кая мар пăхса ÿстерме обязательство илнĕ.

Артель членĕсем хăйсен сăмахне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ. Çуракинче акма таса та сортлă вăрлăх кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ. Кăçал хире 4.500 тонна тислĕк кăларма палăртнă. Халĕ 3.900 тонна тислĕк, 200 тонна торф кăларнă. Государствăна кăçалхи çулшăн аш-какай памалли плана ултă уйăхшăн тултарнă. Сĕт-çу кăçалхи виççĕмĕш кварталшăн пама тытăннă, пурĕ 12.400 литр панă. Сысна ферминчен 260 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă. Икĕ уйăх хушшинче кăна 150 пин тенкĕ тупăш илнĕ те ĕнтĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене пурне те тĕрĕс-тĕкел пăхса усраççĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем пур колхозсен те ăнăçлă та тухăçлă ĕçleme майсем пуррине, резервсемпе туллинрех усă курма кирлине палăртрĕç.

Канашлу Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем чĕнсе каланине йышăнса, тырпул тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк обязательствăсем илчĕ, Сĕнтĕр районне социализмла ăмăртăва чĕнчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăх механизаторĕсем Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ тата Совет правительстви тавра тачă пĕтĕççе, аслă çулпуçпа учитель хушса хăварнисене яланах асра тытса, ĕçри хастарлăхпа пултарулăха темиçе хут ÿстерме, мĕнпур вăя коммунизм тăвас ĕçе пама пулчĕç.

Н. ПУШКИН.
(«Коммунизм ялавĕ» корр.).

Муркаш районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕнчен

ТÿРЛЕТНИ

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн мартăн 25-мĕшĕнче тухнă умстатьинче пĕрремĕш колонкăри тăххăрмĕш абзац вĕçне çапла тÿрлетсе вуламалла: «Çавăн пирки те нумай колхозсен обществăллă хуçалăхĕ кирлĕ пек аталанса пымасть, хăшпĕр колхозсенче ĕçкунĕсем тăрăх тыра тата укça сахал валеçсе параççĕ».

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТАЕТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — мартăн 28-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль **«Богатырский сказ»**. Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи спектакль 20 сехетре пуçланать.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔ—мартăн 28-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине **«Всадник, скачущий впереди»**. Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхи спектакль 20 сехетре пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—мартăн 28-мĕшĕнче 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«По щучьему веленью»**, 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Остров страданий»**.

«УДАРНИК»—мартăн 28-мĕшĕнче **«Первый бал»**.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01342 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.